Шупашкар 2014

«Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форумччен 7 кун юлчĕ

чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

196-197/26602-26603/ № Кĕçнерни кун, 2014, юпа (октябрь), 2 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru



## Йӳнĕ кредит параççĕ

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Мускавра РФ финанс министрĕпе Антон Силуановпа курнăçнă.***

Тĕл пулура палăртнă тăрăх – Чăваш Республики Раççей Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче кăларнă указĕсемпе çирĕплетнĕ мĕн пур индикатора пурнăçлать. Федераци бюджетĕнчен пулăшнине тата республика тухăçлă мерăсем йышăннине кура социаллă пĕлтерĕшлĕ тата васкавлă тăкаксем валли, Чăваш Енĕн парăм обязательствисене пурнăçлама укçа уйăрассине тивĕçтереççĕ.

Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан 2014 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика бюджечĕн хăйĕн тупăшĕ 3,6% пысăкланнă. Кăçалхи кăрлач-çурла уйăхĕсенче республика бюджетне кĕнĕ налук тупăшĕн калăпăшĕ 4,3% ӳснĕ. Çапла тумашкăн тухăççăр тăкаксене чакарнă, патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхĕн механизмĕсене ĕçе кĕртнĕ. Çавна май 2014 çулта Чăваш Ен патшалăх парăмне республика бюджечĕн хăйĕн тупăшĕн 48,2% /2012 çулта – 54,7%/ чакарма пултарнă.

Çавăн пекех Чăваш Енĕн 2012-2013 çулсенче Пĕтĕм тĕнчери финанс корпорацийĕнчен ача сачĕсен строительствипе реконструкцийĕ валли тата кĕске вăхăтлăх илнĕ, пĕтĕмĕшле виçи 3 млрд тенкĕпе танлашакан кредитсемпе çыхăннă парăм обязательствисене виçеллĕ тăвас ыйтусене сӳтсе явнă.

«Раççей Финанс министерствипе ĕçлĕ хутшăнусем йĕркеленчĕç, кирлĕ пулăшăва яланах илетпĕр. Паянхи тĕл пулура Антон Германович Силуановпа малашне çыхăну тытса ĕçлессине, çав шутра хушма пулăшу илессине пăхса тухрăмăр. Калăпăр, эпир кĕске вăхăтлăх кредитсем илнĕччĕ, халĕ вара банксен кредит ресурсĕсем çулталăкри 12,5% таран хакланчĕç. Республика бюджечĕ шайлашуллă, патшалăх парăмĕ хамăрăн тупăшсен 50% пĕчĕкрех, çавна май кăçал Чăваш Ене çулталăкри 0,1% виçепе бюджет кредичĕ пама йышăннă, ку республикăна кулленхи тӳлевсене 5 çуллăха реструктуризацилеме май парать», – тенĕ Михаил Игнатьев тĕл пулу хыççăн журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май.

■ **Н.ЯКОВЛЕВ**

## Çĕнĕ чукун çул пулатех

***Юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра "Раççей чукун çулĕ" АУОра Раççейри хăвăртлăхлă тата пысăк хăвăртлăхлă çӳревĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлекен Общество канашĕн Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин пĕрремĕш вице-спикерĕ Александр Жуков тата "Раççей чукун çулĕ" АУОн пĕрремĕш вице-президенчĕ Александр Мишарин ертсе пынă канашлăвне хутшăннă. Унта пысăк хăвăртлăхлă "Мускав – Хусан – Екатеринбург" чукун çул магистралĕн "Мускав – Хусан" участокĕн строительствин малашлăхне сӳтсе явнă. Дискуссие çавăн пекех Чăваш Республикинчи предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй Владимир Иванов хутшăннă.***

Ларăва уçнă май Александр Жуков пысăх хăвăртлăхлă магистраль строительстви çĕршывшăн экономикăн хăватлă ӳсĕмĕ пулассине, хальхи технологисене аталантарма, налук пырса кĕрессине ӳстерме, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелеме пулăшассине палăртнă. "Проекта бюджетăн çăмăл мар условийĕсенче тытăнма тивет. Çапах та унта хывнă бюджет укçи уйрăм çынсен сумлă инвестицийĕсене илĕртме май парĕ", – палăртнă РФ Патшалăх Думин пĕрремĕш вице-спикерĕ.

Александр Мишарин шухăшĕпе – пысăк хăвăртлăхлă "Мускав – Хусан – Екатеринбург" магистраль Раççейри малашлăхлă проектсенчен пĕри.

Проектлакан "Мускав – Хусан" трасса федерацин çĕршыв халăхĕн 20 процентне пурăнакан çичĕ субъекчĕн территорине пĕрлештерет. Магистраль Раççейĕн 12 миллионер-хулинчен 3-шне çыхăнтарать, пуйăссен хăвăртлăхне сехетре 400 километра çитерме тата пассажирсен çул çинчи вăхăтне перекетлеме май парать.

Пысăк хăвăртлăхлă "Мускав – Хусан" магистрале хута ярсан Чăваш Ен 2020 çул тĕлне 20 млрд яхăн тенкĕ хушма тупăш илме пултарĕ, 2030 çул тĕлне – 43 млрд. Етĕрне, Муркаш, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри çĕрĕсемпе иртекен 118 километр трасса çинче Мăнал /Шупашкар районĕ/ тата Полянки /Етĕрне районĕ/ ялĕсем çывăхĕнче транспорт тата куçса лармалли хальхи йышши икĕ комплекс тума палăртаççĕ. Пысăк хăвăртлăхлă магистралĕн Шупашкар станцийĕ хулана çывăх пулать, Шупашкар магистральне халĕ ĕçлекен чукун çулпа çыхăнтарма палăртнă, çапла вара рельс тăрăх çӳрекен автобуса хута яма май килĕ.

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2014 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе Раççей Федерацийĕн территорине планлас схемăна пысăк хăвăртлăхлă магистраль строительстви енĕпе федераци транспорчĕн пайĕ тĕлĕшĕнчен улшăну кĕртнĕ. Паянхи кун тĕлне асăннă магистралĕн Чăваш Республикин территорийĕпе иртекен тĕп тăрăхне инженери тишкерĕвĕ тăвас тата проект ĕçĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе килĕшсе таталнă.

■ **В.ИЛЬИНА**

ЛАРУ

# Никам та пулăшусăр юлмĕ

## Чăваш Ен вĕсемшĕн иккĕмĕш кил вырăннех



Дмитрий БАРЫШОВ архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

***Украинăри граждан вăрçи пин-пин çынна вырăнтан хускатса тĕнче тăрăх салатрĕ. Кӳршĕ патшалăхра халĕ те лăпкă мар. Хальлĕхе Минскри килĕшĕвĕн пĕр пункчĕ те пурнăçланмасть. Лару-тăру хăçан лăпланасси пирки калама иртерех. Килсĕр-çуртсăр юлнă çынсен тăван кĕтесĕнчен аякра хӳтлĕх шырама тиврĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, социаллă хӳтлĕх пайĕсем тата Раççейри ФМСăн Чăваш Республикинчи управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – пирĕн ене тарса килнĕ 1368 çынна йышăннă, пурăнмалли кĕтеспе, апат-çимĕçпе, вăй питтисене ĕçпе тивĕçтернĕ.***

Украинăран пирĕн республикăна килнисенчен 833-шĕ – ĕç тупнисен йышĕнчен, 162-шĕ – шкул умĕнхи ӳсĕмрисем, 224-шĕ – шкула çӳрекеннисем. Украинăн 1022 çынни республикăри миграци службин органне Чăваш Енре вăхăтлăх хӳтлĕх пама ыйтса çырнă хутпа пынă. Чылайăшне «Контур» тата «Чувашиякурорт» санатори» АУО базисенче, ЧР сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин тытăмĕнчи реабилитаци центрĕсенче, «Заимка» обществăра вырнаçтарнă.

Республика ертӳлĕхĕ вĕсен пурнăç условийĕпе, хумхантаракан ыйтăвĕсемпе кăсăклансах тăрать, пур енлĕн пулăшма тăрăшать. Ку ыйтупа, Украинăран вăрçă-кӳрекен комплекссем йĕркеленĕ, «хĕрӳ лини» телефон çыхăнăвĕпе 190 консультаци панă, кашни кунах социаллă сетьсен тата хыпарсен сайчĕсен мониторингне ирттереççĕ. /Сăмах май, «хĕрӳ линин» телефон номерĕ /8352/ 51-27-80/. Участоксенчи терапевтсемпе педиатрсем йышăнăва пынисен сывлăхне тĕрĕслеççĕ. «Санăн ку е вăл документ çук тесе пăрман е эсĕ урăх патшалăх çынни тесе уйăрман», – пĕлтерчĕ Татьяна Геннадьевна. Украинăран килнисен хушшинче туберкулезлă, ВИЧ инфекциллĕ тата ытти чирпе асапланакан çынсене ятарлă учета илнĕ. Вĕсене Чăваш Республикин бюджетĕнчен, республикăри Хĕрарăмсен канашĕн ыр кăмăллăх фондĕнчен уйăрнă, спонсорсен укçи-тенкипе сиплеççĕ.

> ✓ УКРАИНĂРАН КИЛНИСЕН ХУШШИНЧЕ ТУБЕРКУЛЕЗЛĂ, ВИЧ ИНФЕКЦИЛЛĔ ТАТА ЫТТИ ЧИРПЕ АСАПЛАНАКАН ÇЫНСЕНЕ ЯТАРЛĂ УЧЕТА ИЛНĔ. ВĔСЕНЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКА БЮДЖЕТĔНЧЕН, ХĔРАРĂМСЕН КАНАШĔН ЫР КĂМĂЛЛĂХ ФОНДĔНЧЕН УЙĂРНĂ, СПОНСОРСЕН УКÇИ-ТЕНКИПЕ СИПЛЕÇÇĔ

харçа пула тарса килнисене пулăшу кӳрес тĕллевпе, пирĕн республикăра ятарлă ĕç ушкăнĕ туса хунă. Правительство членĕсем, тĕрлĕ ведомство, предприяти-организаци ертӳçисем пĕрле пуханса тăтăш канашлаççĕ. Правительство пуçлăхĕ Иван Моторин ертсе пынипе ĕнер иртнĕ ĕç ушкăнĕн ларăвĕн кун йĕркинчи икĕ ыйтăва – Украинăран Чăваш Республикине куçса килнисене социаллă адаптаци пулăшăвĕ парасси, вĕсене ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтересси тата адреслă финанс пулăшăвĕ кӳресси – тишкерчĕç.

ЧР сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Богданова ларура тухса каланинчен çакă паллă: юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне шута илнĕ Украина çыннисенчен 26-шĕ Раççейĕн ытти регионне тухса кайнă. Юлнисем пурте кирлĕ медицина пулăшăвĕ илеççĕ. Çав тĕллевпе тарса килнисем вăхăтлăх пурăнакан тăвата пунктра та социаллă пулăшу кӳрекен комплекссем йĕркеленĕ...

Унсăр пуçне аякран килсе хӳтлĕх тупнисене социаллă адаптаци шучĕпе пурлăх тĕлĕшĕнчен хальлĕхе 708,0 пин тенкĕлĕх пулăшнă. Тĕрĕссипе, Хĕрарăмсен канашĕн ыр кăмăллăх фончĕ кăна 1,8 млн тенкĕ куçарнă. Вĕсенех республикăри халăха социаллă пулăшу кӳрекен центрсем çи-пуçпа, атă-пушмакпа, гигиена япалисемпе, апат-çимĕç продукчĕсемпе тивĕçтерсех тăраççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче Украинăран килнĕ çемьесенчи шкула кайнă ачасене вĕренӳ хатĕрĕсем, спорт форми, ранецсем тӳлевсĕр илсе панă. Кĕрхи-хĕллехи тапхăр валли ăшă тумтирпе атă-пушмак хатĕрленĕ. Украинăран килнĕ ачасен 87% шкул формипе тивĕçтернĕ. Юлнисем те, татах килекенсем ăна кĕçех илĕç.

Сăмах вĕренӳ çине куçсан ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов ку сферăри тăрăмпа тĕплĕ паллаштарчĕ. Владимир Николаевич пĕлтернĕ тăрăх – професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенче Украинăран килнĕ 20 çамрăк /иккĕшĕ коммерци никĕсĕ çинче медицина колледжĕнче, 18-шĕ – республика бюджетĕнчен укçатенкĕпе/ пĕлӳ илме тытăннă. Аслă вĕренӳ заведенийĕсенче 7 çамрăк тӳлевлĕ вĕренме пуçланă. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ те тĕллевлĕ 7 бюджет вырăнĕ хатĕрленĕ, анчах студент шутне тăрас текен тупăнман. ЧР Вĕренӳ министерстви професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенче Украинăран килекенсем валли тата 10 бюджет вырăнĕ хатĕрленĕ.

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçин ĕçĕсене пурнăçлакан Наталья Тараканова ку ведомствăн «тӳпи» çинчен каласа кăтартрĕ. Ĕç вырăнĕ шыракансене – сăмах Украина çыннисем пирки пырать – ятарлă консультаци пункчĕсенче вакансисем, ĕçе вырнаçма кирлĕ документсем, вĕсене ăçта хатĕрлемелли, страховани свидетельствипе ИНН номерне ăçта илмелли таранах тĕплĕ паллаштараççĕ. Вакансисен банкне кунсерен çĕнетсе тăраççĕ. Ăна Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин сайтĕнче тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен официаллă порталĕнче, «Украинăран килнисене хăй пурăнакан вырăнта ĕç тупма пулăшасси» пайра вырнаçтарнă. Авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне унта 1886 пушă ĕç вырăнĕ пурри çинчен пĕлтернĕччĕ. 371-шĕ – пурăнмалли вырăнлă ваканси. 124 организаци ĕç вырăнĕ сĕнет. Вăтам шалу – 14,6 пин тенкĕ. Вакансисен 70% – рабочи специальноçĕ: сварщик, штукатур-маляр, водитель, бетонщик, слесарь тата ытти те. Ял хуçалăхĕнче ветеринари врачĕсем, ĕне сăвакансем, трактористсем кирлĕ. Ĕçпе тивĕçтерекен органсене 335 украин пынă. Чылайăшĕн ыйтăвне тивĕçтернĕ.

Украинăран куçса килнисене адреслă финанс пулăшăвĕ парасси мĕнле пулса пынипе ЧР финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Фарида Муратовăпа ЧР сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Богданова паллаштарчĕç. Малтан федераци бюджетĕнчен куçаракан укçа пĕр тикĕссĕн килсе тăнă, ăна çийĕнчех тивĕçлисене валеçнĕ тăк, халĕ ку «юхăм хавшанă». Иван Моторин премьер-министр яваплă ведомствăсене ку ыйтăва çивĕчрех çĕклеме, икĕ енлĕ килĕшĕве туллин пурнăçлама сĕнчĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

**ЮПА УЙĂХĔН 4-мĕшĕччен «Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. Васкăр, укçăра перекетлĕр!**

**КУН хыççăн КУН** ☎ 56-04-26, 28-82-91

## ОШ – террора хирĕç

***Чăваш Енре терроризма хирĕç вĕренĕвĕн юлашки тапхăрĕ вĕçленнĕ.***

Унăн сценарийĕпе килĕшӳллĕн диверсантсен ушкăнĕ федерацин М-7 трасси çинче Сăр шывĕ урлă хывнă кĕперсене сыхлакан хурал пӳлĕмне хĕç-пăшалпа тапăннă, ун хыççăн кĕперсем çине минăсем вырнаçтарса сирпĕтсе янă.

Чăваш Республикинчи Оперативлă штаб ĕçе кӳлĕннĕ. Çынсен хăрушсăрлăхне тивĕçтермелли мерăсем йышăннă, диверсипе террор акчĕсене сирес, хĕç-пăшаллă преступниксене сиенсĕрлетес енĕпе ятарлă мероприятисем ирттернĕ. Ятарлă тĕллевлĕ подразделенисен ĕçне тухăçлăрах тума Раççей ФХСĕн авиацине те вĕсене пулăшма явăçтарнă.

Тĕп тĕллев штабăн вăй ушкăнĕн çакнашкал лару-тăрури хăнăхăвне çирĕплетесси пулнă. Вĕренĕве хутшăннисем умри тĕллевсене пурнăçланă. Вĕренӳ ертӳçисем вĕсен ĕçне ырласа хакланă.

**К.НИКОЛАЕВ.**

## Пухмач медальсемпе пуянланнă



***Çак кунсенче çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче ял спортсменĕсен Пĕтĕм Раççейри ăмăртăвĕсем иртнĕ. Чупакан атлетсемпе хăвăрт утакансем тата кĕрешӳçĕсем Кӳкеç поселокĕнчи стадионта вăй виçнĕ.***

Унта 10 регион чысне 300-е яхăн спортсмен хӳтĕленĕ. Пирĕн ентешсем пухмача 29 медальпе пуянлатнă, вĕсенчен 22-шĕ – утакансен. Чи пысăк наградăна Марина Пандаковăпа Анжела Иванова тивĕçнĕ, вĕсем хĕрарăмсемпе юниорсен ушкăнĕнче 1000 метрлă дистанцие пĕрремĕш вĕçленĕ. Яшсемпе арçынсен тупăшăвĕнче Сергей Сергеевпа Кирилл Фролов çĕнтернĕ. Чупакансен ăмăртăвĕнче Татьяна Григорьева палăрнă: 500 тата 1000 метрлă дистанцисенче пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Ытти ушкăнра тепĕр виçĕ ентеш те кĕмĕл медальсене çĕнсе илнĕ. Кĕрешӳçĕсен турнирĕнче Илья Черновпа Виктор Танлэне ăннă. Хăйсен виçисенче вĕсем пĕрремĕш тата виççĕмĕш вырăнсене йышăннă.

Çак кунсенчех Черкесск хулинче армспорт енĕпе иртнĕ ăмăртуран пирĕн хĕрсем виçĕ наградăпа таврăннă. Пысăк çитĕнӳпе Олеся Игнатьева, Мария Ерзукова тата Екатерина Иванова савăнтарнă.

**О.МАСЛОВ.**

## ГТО хастарĕсем валли – ятарлă портал



***"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" пĕтĕм тĕнчери форум умĕн Чăваш Енре Пĕтĕм Раççейри "Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр" физкультурăпа спорт комплексĕн интернет порталĕ ĕçлеме пуçланă.***

www.21.sport-russia.org адреспа вырнаçнă программа ГТО тытăмне йĕркелеме май парать. Çавăнпа унта регистрациленекен пĕрлехи номер илет тата пурнăçламалли нормативсене палăртать. Тест витĕр тухаканăн кăтартăвĕсем харпăр хăй кабинетĕнче упранаççĕ. Интернет портал ĕçĕ-хĕлне çак кунсенче Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕнче тĕрĕсленĕ. Унта чи малтан хулари ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсенче ăсталăха туптакансем, ЧР Сывлăх сыхлавĕпе Спорт министерствисен ĕçченĕсем çырăннă, регистрациленнисем пурте ГТО нормативĕсене пурнăçлама хутшăннă. Вĕсем туртăнас, отжимани тăвас, тăршшĕне сикес, чупас тата кире пуканĕ çĕклес енĕпе тупăшнă. Хастаррисене кăтартусене çырса пымалли кĕнеке панă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Тренировка иртет

***Юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче Раççей граждан оборонине йĕркеленĕренпе 82 çул çитет.***

Çав кун РФ тата унăн субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе граждан оборони енĕпе Пĕтĕм Раççейри тренировка иртет. Ун чухне централизациленĕ хыпарлавăн регионри тытăмĕн №РАСЦО№ халăха васкавлăн пĕлтермелли комплекслă тытăмĕн элеменчĕсене те тĕрĕслĕç, чăн та, электричество сиренисене ĕçлеттермĕç.

"Юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче граждан оборони енĕпе Пĕтĕм Раççейри тренировка иртет, çавăнпа хăраса-пăлханса ан ӳкĕр, лăпкăлăха тата йĕркене пăхăнăр. Ку информацие хăвăр пĕлĕшĕрсем тата тăванăрсем патне те çитерме ыйтатпăр", – пĕлтерет Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ.

**Çанталăк çинчен**

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен 7 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, çĕрле 2 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 45 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет те 29 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, çĕрле 2 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 755 мм, сывлăшри нӳрĕк 50 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет те 24 минут.**

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# «Эпĕ вĕсенчен мĕнрен кая?»

## Людмила шкул çулĕсенчех дояркăсене улăштарнă, ĕне пăрулаттарнă

***Людмила Волкова уроксем хыççăн, кану тата каникул кунĕсенче амăшне йывăр ĕçре пулăшма тăван хуçалăхăн ĕне фермине çӳренĕ. Лидия Михайловна Муркаш районĕнчи ăратлă вырăх çитĕнтерекен "Передовик" совхозра дояркăра ĕçленĕ. Производствăри пысăк çитĕнӳсемшĕн хаклă парнене сахал мар тивĕçнĕ. Водительре вăй хуракан мăшăрĕпе Алексей Васильевичпа ачисене те хăйсем пекех тĕплĕ те чуна парса ĕçлеме хăнăхтарнă.***



● *Людмила Бояринова.*

Виççĕмĕш класра чухне Людмила хăй тĕллĕнех ĕне сунă – ăнсăртран чирлесе ӳкнĕ дояркăна улăштарнă. Ăна амăшĕ пулăшнă паллах. Харсăр хĕр ача çакăнпа мăнаçланнă, малашне те çитĕннисен ĕçне хутшăнас ĕмĕтпе хавхаланнă. "Аслисем пултараççĕ, эпĕ вĕсенчен мĕнрен кая?" – шухăшланă вăл. Аслăрах классенче хăюллăнах отпускри дояркăсем вырăнне юлнă. Пĕррехинче яваплă çынсем фермăра пулманран хăй тĕллĕнех ĕне пăрулаттарнă. Çакăн хыççăн ветеринар пулас ĕмĕчĕ татах çирĕпленнĕ.

Людмила 1966 çулхи нарăсăн 23-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Хачăк салинче çут тĕнчене килнĕ. Вырăнти пуçламăш шкул хыççăн Мăн Сĕнтĕрте вăтам пĕлӳ илнĕ. Харсăрскер пионер отрядне ертсе пынă, класс комсоргĕ, унтан шкулти комсомол организацийĕн ертӳçи пулнă.

Волковсем çемьере пиллĕкĕн ӳснĕ: 4 хĕр те 1 ывăл. Людмила – вăталăххи. Чуна пахалакан ырă енсене вăл ашшĕ-амăшĕсĕр пуçне аппăшĕпе пиччĕшĕнчен вĕренсе ăша хывнă, çав вăхăтрах йăмăкĕсемшĕн ырă тĕслĕх шутланнă. Кам пуласса шкул çулĕсенчех тĕплĕн палăртнăскер 1984-1989 çулсенче Хусанта вырăх тухтăрне вĕреннĕ. Çывăх çыннисем ĕмĕтленнĕ пекех кил-йышра вăталăххисĕр пуçне тата иккĕшĕ пурнăçа ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă. Аслă хĕрĕ Елена Мăн Сĕнтĕрте апат-çимĕç тирпейлекенре ĕçлет, Людмилăн йăмăкĕ Ольга Чул хула облаçĕнче – дояркăра.

Л.Волкова 4-мĕш курсра вĕреннĕ чухне клубра паллашса çывăх туслашнă Евгенийпе пĕрлешнĕ, Бояринова пулса тăнă. Мăшăрĕ юнашар ялтан – Мăрсакассинчен, Евгений Михайлович тĕп килтен уйрăлса тухса ялта çурт хăтланă.

Арăмĕн палăртнă вăхăтпа яланах пĕр килмен ĕçне кил хуçи ăнланать. Иртерех çитмелле чухне çăмăл автомашинăпа леçет, вăрах тытăнса тăрсан пырса илет.

Людмила Алексеевна хăйне вăхăтра пулăшакансене, маяк евĕрех тĕрĕс çул кăтартакансене ырăпа аса илет. "Передовик" совхоз ертӳçинче тăрăшнă Валерий Краснова, Виталий Васильев ферма заведующине, Валентина Белова ветврача, Анатолий Романов ветсанитара чĕререн тав тăвать.

Çамрăк специалист алла диплом илсен 3 çул тăван ялĕнче техник-осеменаторта вăй хурать. 1992 çултанпа ветлабораторире – ветврач, 2011 çултанпа ветстанцире – ветврач-эпизоотолог. 2004-2007 тата 2013 çулсенче ветстанци пуçлăхĕн çумĕ пулнă, халĕ – ертсе пыракан веттухтăр. Апла пулин те ăна станци пуçлăхĕ Николай Яковлев ĕçпе ăçта та пулин каяс тăк хăйĕн вырăнне шанса хăварать.

Людмилăпа Евгений Бояриновсем 3 ача ӳстернĕ. Еленăпа Владимир – çемьеллĕ, Екатерина Москакасси шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренет. Аслă ӳсĕмрисем 3 мăнукпа савăнаççĕ.

Л.Бояринова 2004 çултанпа учреждените профсоюз пуçламăш организацине ертсе пырать. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна 2007 çулта ЧР Профсоюз организацийĕсен пĕрлешĕвĕн президиумĕн, çав çулах ЧР Патшалăх ветслужбăн Хисеп хучĕсемпе чысланă.

Кăçал районти ветстанци 50 çул тултарнă май Людмила Алексеевнăна ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп хучĕпе хавхалантарнă.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

АСА ИЛӲ

# «Çерем уçни халĕ те куç умĕнче...»

***Çапла калать Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекри çитмĕл улттăри Геннадий Никишкин. Ялти хисеплĕ шур сухалăн аса илме сăлтав пысăк. Теприсем çеремлĕ тăрăха иртнĕ ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсенче çуллахи каникулта кайса курнипех мухтанаççĕ, хаçатра тĕрленчĕк пичетлеме хистеççĕ. Гена пичче виçĕ çул ĕçленĕ пулин те кăкăр çапса çӳремест. Ăнсăртран калаçу пуçламасан ку материал çуралмастчĕ пулĕ.***

Мĕншĕн асра, халĕ те куç умĕнче вăл? Мĕншĕн тесен Геннадий Ефимовичăн пĕтĕм çамрăклăхĕ тăван кĕтесрен питĕ аякра иртнĕ. Яшлăх унăн чун-чĕринче тарăн йĕр хăварнă. Аса илӳ авăрне путма Никишкинсен пахча вĕçĕнчи çырма айлăмне антăмăр. Кунта вăл пĕчĕк кӳлĕ чавтарнă, ачисем килсен шашлăк пĕçерме вырăн ăсталанă, сĕтелпе сак лартнă. Çумăртан хӳтĕленме тăраллă хӳшĕ те пур. Кунта улмуççи, чие, хурлăхан, хăмла çырли ӳсеççĕ. Çырмана анмалли сукмак хĕррипе – тăршшĕпех пилешсем. Юратать çут çанталăк илемĕпе савăнма тата унпа кăсăкланма пĕлĕшĕм. Кил таврашĕнче çăка хăвăлĕнчен тунă пилĕк шăнкăрч йăви çакнă. "Аякра чухне вăрман курман, шыв юххин сассине илтмен. Сĕре тунсăхлаттăм. Çавăнпа киле таврăнсан йывăç лартма, çăл куççене тирпейлеме ĕмĕтленеттĕм", – хавасланса паллаштарать пуянлăхĕпе Геннадий Ефимович.

1957 çулта вун саккăрти Гена салтак атти тăхăннă. Пĕвĕпе лутра пулсан та çивĕч ăслă, пысăк тавра курăмлă, вăр-вар йĕкĕт Германири Совет Çарне лекет. Тивĕçлĕ пĕлӳпе хăнăху илнĕ хыççăн ăна танк командирĕ пулма çирĕплетеççĕ. Вăл командирсен тавне темиçе хутчен тивĕçнĕ.

Акă ĕнтĕ киле пуçтарăнма та вăхăт. Анчах пурнăçра яланах хамăр шухăшланă пек пулмасть. Пĕррехинче салтаксен пысăк ушкăнне пуçтараççĕ. Пуçлăхсем, комсомол хастарĕсем çерем çĕр пирки туха-туха калаçаççĕ.

Геннадий хăй ирĕкĕпе унта кайма заявлени çырать. Пĕр пек шухăшлисем чаçре 78-ăн. Часах комсомолецсене ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн путевкине тыттараççĕ те ырă сунса вăрăм çула ăсатаççĕ.

– Германирен пире пуйăспа илсе тухрĕç. Пурĕ вун икĕ вакун. Сахалтан та сакăр çĕр çамрăк. Вунă кун кайрăмăр, йăлт ывăнса çитрĕмĕр. Çакă пирĕн малашлăх çăмăл пулас çуккине систерчĕ-тĕр, – терĕ Геннадий Ефимович. – Омск облаçĕнчи Ульяновскри механизаци училищине илсе пычĕç. Кунта гусеницăллă тата кустăрмаллă тракторсене, комбайнсене çӳретме 5 уйăх вĕрентрĕç. Юлашки чарăну Çеçкеллĕ ялĕнче пулчĕ.

ХХ ĕмĕр пуçланиччен ку тăрăхра çын пурăнман. Таврара ураран ӳкерекен тусанлă çил çеç хуçаланнă. Пĕрремĕш революци хыççăн, халăхсене пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçармалли юхăм пуçлансан, кунта Херсон, Орел тата Полтава кĕпĕрнисенчен хастар çынсем килнĕ, 1907 çулта Русская Поляна никĕсне хывнă. Тепĕр çулах 162 кил вырнаçнă. Ялта икĕ пĕчĕк лавккасăр пуçне шкул та, сыватмăш та пулман. Территорийĕпе Казахстана кĕнĕ. 1935 çулта ăна Омск облаçне кĕртнĕ, район центрĕ тунă. Апла пулин те вăл аталанайман. Шывсăр, çутăсăр камăн пурăнас килтĕр? Район центрĕнчи пĕртен пĕр грузовикпа Омска çур кун ытла кайнă, лашапа – тăваттă. Партипе Правительство 1954 çулта, çерем çĕре уçма йышăннă хыççăн, пурнăç çĕнĕрен вĕреме тытăннă. Русская Поляна Омск облаçĕнче çĕнĕ çĕре уçмалли тĕп центр пулса тăнă. Патăрьел, Шăмăршă, Елчĕк тата Комсомольски çыннисем ку районти лаптăксене сухалама, тырă акма пуçланă. Илĕртӳллĕ ятлă ялсем çуралнă: Солнечное, Целинное, Добровольское, Розовка...

Цветочное поселока 1961 çулхи çуркунне Геннадий Никишкин салтак тумĕпе юлташĕсемпе пĕрле çитнĕ.

– Ĕçе пикенсенех ялта совхоз йĕркеленĕ. Çакăнта илсе килчĕç пире. Саманран тунă пĕр хуралта вырнаçтарчĕç. Урайĕ – çĕр, чӳрече пек шăтăксене марльăпа хупланă. Казармăри пек çирĕм кравать лартнă, çиелте – улăм тултарнă тӳшекпе

ПĔРРЕХИНЧЕ ФЕРМА ТАВРАШĔНЧИ ШЫВПА ТУЛНĂ СИЛОС ШĂТĂКНЕ АСĂРХАЙМАРĂМ – ТРАКТОР ТӲНЧĔ. ЧӲРЕЧЕРЕН АРАН ТУХСА ĔЛКĔРТĔМ

минтер. Чăваш каччисем виççĕн: Саша Васильев – Çĕрпӳ тăрăхĕнчен, Виталий Ельцов – Вăрмар районĕнчен тата эпĕ. Виççĕмĕре те С-80 трактор шанса пачĕç. Техника сĕре вăйлă. Анчах ман пек лутра çынна ĕçлеме меллĕ мар – умри çула ура çине тăрса пăхса пымалла. Пĕррехинче ферма таврашĕнчи шывпа тулнă силос шăтăкне асăрхаймарăм – трактор тӳнчĕ. Чӳречерен аран тухса ĕлкĕртĕм. Бригадира çаплах каларăм: "Текех ун çине лармастăп!". Вара мана ДТ-54 трактор пачĕç. Питĕ лайăх ĕçлетчĕ. Тĕлĕкре те куркалатăп хамăн тимĕр ута, – терĕ Геннадий Ефимович. – Пирĕн уйрăм çĕрĕ пысăкчĕ, ăна тăвата бригадăна пайланă. Эпĕ – пĕрремĕшĕнче. Каçхине 5 тракторпа тытăнатпăр та ир енне икĕ çухрăм тăршшĕ лаптăка /400 гектар/ сухалса пĕтеретпĕр. Пирĕн ялан сухаламалла пулнă. Механизаторсене улăштарма çын çитмен. Çавăнпа икшер, виçшер смена ĕçленĕ. Çапах чăтнă, ертсе пыракансене итленĕ, кутăнлашман. Каçхине куç хупăнас патнех çитетчĕ. Пĕррехинче çамрăк тракторист Малышев хирте сухаланă чухне тĕлĕрсе каять те касăран тухса казахсен пĕр аулĕнчи çурт кĕтессине çĕмĕрсе хăварать. Мĕскĕне хуçисем чутах хĕнесе вĕлермен. Çавăнпа бригадир пире ытла ывăнса çитсен пăртак тĕлĕрсе илме сĕнетчĕ. Кану кунĕ е уяв мĕнне пăхман. Саратов нимĕçĕ Мюллер управляющи пирĕн 12 пин гектара сухаласа пĕтермелле терĕ. Хире апат илсе килетчĕç, çунтармалли-сĕрмелли материал турттаратчĕç. Ятарлă юсав бригади тăтăш çӳретчĕ, çĕмĕрĕлнĕ агрегатсене вырăнтах улăштарса е тӳрлетсе хăваратчĕ.

Çеçкеллĕ халĕ икĕ пĕчĕк аулпа Цветочинское ял тăрăхне кĕрет, унăн тĕп ялĕ шутланать. Кунта 1413 çын пурăнать. Мĕн пур лаптăкĕ 28784 гектар. Халь хаççăн кăна ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Косбарт телефонпа пĕлтернĕ тăрăх – паян кунта усăсăр выртакан çĕр çук.

Çулталăк çурă каялла эпĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне янă Çырури сăмахсене ырласа хамăр районти 600-700 суйлавçă пурăнакан пĕчĕк ял тăрăхĕсене пĕрлештерсе аслăлатма кирли çинчен статья çырнăччĕ. Çакăн хыççăн пĕчĕк ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем мана шурă куçпа пăхма тытăнчĕç. Нихăшĕ те пукана вĕçертесшĕн мар. Кунта вара пĕр ял тăрăхĕн çĕрĕ кăна вăтăр пине яхăн гектар.

Геннадий Ефимовичăн каламалли нумай. Ватлăх енне кайсан çын тин çеç пулса иртнине манать. Çерем уçни вара, çур ĕмĕр иртнĕ пулин те, асрах.

– Саман общежитире эпир ака тата вырма вăхăтĕнче пурăнман та, – калаçать малалла Н.Никишкин. – Пирĕн хӳшĕ хирти станта пулнă. Эпир ытларах тĕп усадьбăран 10-15 çухрăмри куçарса çӳрекен вакунсенче тăнă. Çанталăк сулхăн чухне унта сивĕччĕ: шăрăхра мунчари пек пăчăччĕ. Тĕрлĕ курăк кашласа ӳсекен хирсене сухалама пĕрре те çăмăл пулман. Кăштах тарăнрах ярсан плуг тĕренĕ йывăрлăха чăтаймасть – каталать. Вара çиелерех сухалама хăнăхрăмăр. Совхоз çулранçул сарăлса, çеçен хире пусă çаврăнăшне кĕртсе пыни вырăнти халăха килĕшмен. Колхозсене унччен ирĕк пулнă. Вĕсем кунта сурăх тата лаша кĕтĕвĕсене пĕр чăрмавсăр çӳретнĕ. Хăш-пĕр чăрсăр хăйсен çĕрĕсене сухалама чарас тесе юлан утпа килсе радиаторсене сенĕкпе чиксе шăтарнă. Пĕррехинче 9 "Беларусь" трактора юрăхсăра кăларчĕç. Çавăнпа тепĕр чухне ывăннипе кăна мар, çав пуçтахсенчен сыхланас тесех кабинăра çывăрнă. Ăмăртура эпир, чăвашсем, ялан çĕнтерӳçĕсен шутĕнчеччĕ. Мана икĕ çултан "Çерем çĕрсене уçнăшăн" паллăпа чысларĕç. Ăна пурĕ 360 пин çын тивĕçнĕ. Çак паллă тивĕçлĕ канăва каякансене "Ĕç ветеранĕ" ят илме май пачĕ.

– Ака вĕçленĕ хыççăн мана тракторпа туртса çӳремелли, тĕш тырă пуçтармалли "Сталинец-6" комбайн пачĕç, – аса илӳ авăрне татах путать Геннадий Ефимович. – Ун чухне çавăн пек айван техника кăна пулнă. Пĕринпе вырса, тепринпе тĕшĕлесе пынă. Тепĕр çултан кăна хăй тĕллĕн çӳрекен "СК-3" комбайнсем килме тытăнчĕç. Иккĕмĕш çул эпĕ çавăн çине куçрăм. Унпа самай çăмăл. Хире гербицид сапман пулсан та пиçенпе анра çарăк е мăянпа армути алхасман – таптасаччĕ. Ĕççире пĕр канмасăр вырнă. Тырра комбайнсем патĕнчен "полуторка" машинăсемпе йĕтем çине турттаратчĕç. Унăн кузовне тонна çурă кăна кĕрет. Йĕтеме леçсе ĕлкĕрейместчĕç. Çавăнпа тырра трактор кĕрсе çӳремен ятарлă лаптăксене тăкатчĕç. Автомашина килеймесен комбайнпа кайса силлеттĕмĕр. Чăн-чăн çĕр ĕçченĕ кун пек нихăçан та хăтланмĕ. Анчах кунта пуçлăхсен тĕллевĕ урăхларах – хăть мĕнле майпа та тырра пуçтарса илмелле! Хирте пĕр тулă тунине те хăвармалла мар. Çӳлти органсене тухăç пирки лайăх отчет памалла. Улăм урине аса илтерекен тырă кайран, çумăрсем хыççăн, симĕсленсе шăтса каятчĕ.

Хирти условисене килтипе танлаштараймăн. Улăм тӳшек çинче выртса пурăннипе пуç пыйтланатчĕ. Кĕпейĕм – тусанпа мазут ăшĕнче. Саман сарайра та, хирти вакунра та йĕке хӳресем кĕтӳпе çӳретчĕç. Каçхине ши те ши! шăхăраççĕ. Малтан сĕре йĕрĕнтеретчĕç. Кайран хăнăхатăн – хĕвех кĕрсе выртатчĕç. Эпир лăш курмасăр ĕçлесе ывăннăскерсем, вилнĕ пек çывăрнăран, туймастăмăр. Вĕсем супăне кăшласа, хире чĕре сури тума тесе чикнĕ апата çисе яратчĕç. Поварсем хире яшкапа пăтă илсе килейменни те пулнă. Вара икĕ кун та выçă ĕçлеме тиветчĕ. Тусан кĕнĕрен куççем шыçăнатчĕç. Хуплакан куçлăх та пулăшмастчĕ. Çулла пуç тăрринче пĕр шелсĕр хĕвел çунтарать. Çакăн пек йывăрлăха пурте чăтайман. Хиртен тракторпах район центрне çити каятчĕç, ăна вокзал умне лартса килĕсене таратчĕç, бухгалтеринче тата кассăра ĕçшĕн татăлмаллине те пăхса тăмастчĕç. Механизаторсен аллинче кĕмĕл ан пултăр тесе ĕç укçине кашни уйăхра мар, ĕççи вĕçленсен кăна панă.

Савăнмалли самантсем те пулнă. Çеçкеллĕре хăмаран çапса тунă клуб пурччĕ /каярахпа ăна сӳтсе кирпĕчрен купаларĕç/. Хиртен канма килсен, общество мунчинче çăвăнса тасалсан культура çуртне каяттăмăр. Пирĕн пек хусах каччăсемпе хĕрсем ялта 400-тен те кая марччĕ. Шăмат кунсенче кино кăтартатчĕç, ташă каçĕ йĕркелетчĕç. Эпĕ ачаллах купăс каланă та, ăна мана тӳрех тыттаратчĕç. Çутăласпа çеç саланаттăмăр. Çакăнтах чылайăшĕ паллашса çемье çавăрнă. Хамăн та чуна пăлхатакан самантсем пулман мар-тăр. Анчах атте-аннерен пил илмесĕр татăклă утăм тума шухăшламан. Çамрăксем туслă пурăннă – хирĕçмен, çапăçман. Кайса курас килет те çав вырăнсене. Ун чухнехи ертӳçĕсене те. Хăшĕсем леш тĕнчене те куçма ĕлкĕрчĕç пулĕ. Хам та сакăр вуннă енне кармашатăп.

Çак сăмахсем хыççăн Геннадий Ефимович пĕр кана шăпланчĕ. Ăнланатăп – унăн куçĕ умĕнче иртнĕ мĕн пур йывăрлăхсемпе савăнăçлă самантсем йăлтах кинори евĕр шăва-шăва иртеççĕ.

■ **Николай ЛАРИОНОВ**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# Ял клубĕ. Кирлĕ-и вăл паян?

Ял тата культура учрежденийĕ. Мĕнлерех шайлашура вĕсем? Хуларан инçетре, «упа шăтăкĕнчи тĕттĕм кĕтесре» чăваш искусстви, ӳнерĕ, литератури кăсăклантараççĕ-и ăна? Пушă вăхăта ял çамрăкĕ мĕнле ирттерет? Ыйтусен хуравне тĕшмĕртме яллă вырăнти культура учрежденийĕсене тухса çӳреме тивни пулăшрĕ темелле.

Чăваш ялĕсенче, çĕр-шыври ытти хутлăхри пекех, çамрăксен йышĕ сахаллансах пырать. Çакăн сăлтавĕ чылай. Икĕ ĕмĕр чиккинче ял хуçалăхĕсем хăйсен ĕç-хĕлне самай вăйсăрлатрĕç, чылайăшĕ аркансах кайрĕ. Çавна май вырăнта ĕç çукки халăха, çамрăксене уйрăмах, хуланалла «хăваларĕ». Çамрăк ăрушăн халĕ çул уçă: хулана аслă пĕлӳ илме каяс килет-и е унта ĕçлеме кăмăл тăвать-и – тархасшăн. Хуçалăхĕ çирĕпписенче те хĕр-упраç йышлах мар. Кунашкаллисенчен те тухса тарас теççĕши каччăсемпе хĕрсем? Тепĕр чухне ашшĕ-амăшĕ те хăйĕн тĕпренчĕкĕсене шутсăр хĕрхенет пулĕ, ачамăрсем пирĕн пек пилĕк авса ĕмĕрне ан ирттерччĕр тет ахăр. Çапла-и, капла-и – чăваш ялĕ пушансах пырать /2002 çултанпа халăх йышĕ республикăра 76,1 пин çын чухлĕ чакнă/. Çавна май шăпах маларах хускатнă евĕр ыйтусем тухса тăраççĕ: ялта клуб, вулавăш, музей тата ытти кирлĕ-и? Çук тесе калакан çын пур-ши? Иккĕленетĕп. Çапах та тĕрĕс хак пани питĕ вырăнлă. Клуб е культура çурчĕ, библиотека е музей пурри питĕ лайăх, анчах та вĕсене ĕçлеттермелле вĕт-ха – кадрпа тивĕçтермелле, мероприятисем ирттермелле, тытса тăмалла тата ытти те.

Юлашки вăхăтра ял культурин аталану стратегийĕ халăх йышлă çӳрекен тата мероприятисем ирттерессипе палăрса тăракан клубсене ытларах пулăшассипе, вĕсен ĕçне тата та вăйлатассипе çыхăннă. Çапах та çакă ыттине çапса хуçмалла тенине пĕлтермест. Киввисене, халăха йышăнма май çуккисене, оптимизацилемелле е ун вырăнне çĕннине çĕклесе лартмалла? Кашни тĕслĕхпе тимлĕ пулмалла. Ваттисем каланă пек çиччĕ виçсе пĕрре касмалла.

Иртнĕ çул муниципалитет культура учрежденийĕсене çĕнетме, тĕпрен юсама республика бюджетĕнчен 22,6 млн тенкĕ уйăрнă. Кăçал валли те унран сахал мар палăртнă.

Паллах, çак нухрат пурин валли те çитмĕ. Ялта клуб е вулавăш çуккисене мĕнле майпа пулăшмалла? Культурăн куçса çӳрекен хатĕрĕсемпе анлăрах усă курма тăрăшмалла. Шел те, хальлĕхе республикăра пурĕ те икĕ автоклуб çеç-ха. Çĕртме уйăхĕн вррринче Шупашкарта федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен Культура министерствисен канашлăвĕ иртнĕччĕ, ун чухне Раççей культура министрĕн çумĕ Алла Манилова Чăваш Ене тата икĕ автоклубпа тивĕçтерме шантарнăччĕ.

Патшалăх пулăшăвне кĕтсе усăллă вăхăта сая ярас мар текенсем те пур-ха республикăра. Халăх вăйĕпе темиçе çул каялла Муркаш районĕнчи Катькас ял тăрăхĕнче тăпăл-тăпăл клуб хута кайнăччĕ. Ик-виç çул каялла Шупашкар районĕнчи Атăльялта спонсор пулăшĕвĕпе çĕкленнĕ клуб ĕçлеме пуçларĕ. Культура ĕçченĕсем никамран пулăшу ыйтма çуккипе хăйсен вăйĕпе юсанă, тĕпрен çĕнетнĕ культура учрежденийĕсен шучĕ миçе-ши тата? Кăçал çулла çавнашкал пĕр тĕслĕхе хамăн курса ĕненмелле пулчĕ. Сăмахăм Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Нарат Чакинчи Людмила Данькова вырăнти культурăпа кану центрне иккĕмĕш пурнăç парнелени пирки. Ăна çак ĕçре мăшăрĕпе ывăлĕ пулăшатчĕç. Маччана юсанăшăн çеç ятарласа тытнă строителе кăштах тӳлеме май тупнă. Малалла пурнăçламаллин вĕçĕ-хĕрри курăнмасть пек. Людмила Геннадьевна вара, кирек мĕнле лару-тăрăва та çĕнтерме хăнăхнăскер, кăçалхи раштав уйăхĕнче ялти хорăн 90 çулхи юбилейне тĕпрен çĕнетнĕ клубра паллă тума ĕмĕтленет.

Çапла шухăшлатăп: ял çыннисен вăйĕпе, культура учрежденийĕсен ертӳçисен хастарлăхĕпе çĕнĕрен ĕçлесе кайнă культура вучахĕн ĕмĕрĕ вăрăм пулĕ. Унта – вĕсен чунĕ, ĕмĕчĕ. Терт-нушапа çуралнă япалана хаклатăн, хисеплетĕн, упратăн. Чун ăшшипе хатĕрленĕ мероприяти те кăмăла çĕклет, хавхалану кӳрет. Ун пек тĕл пулăва, «çавра сĕтеле», конференципе концерта мероприятишĕн яваплисем çеç мар, ял-йыш та хастар хутшăнĕ.

Кăçал – Культура çулталăкĕ. Паллă çак пулăма республикăри культура ĕçченĕсем хăйсем пултарнă таран туллин уявлама тăрăшаççĕ. Пĕрисемшĕн, юхăнса кайнă клуб е кану çурчĕн ертӳçишĕн, тен, çурта тирпейлесе йĕркене кĕртни те пысăк çитĕнӳ шутланать пулĕ. Теприсем вара, ахăртнех, çулталăк тăршшĕпе вун-вун мероприяти ирттерме палăртнă. Чăваш Енре Культура çулталăкĕ уçăлнă май иртнерĕ савăнăçлă мероприятире темиçе çынпа калаçма тивнĕччĕ. Сăмахран, Элĕк районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи культура керменĕнчи «Валинке» халăх фольклор коллективĕн ертӳçи Лидия Филиппова Культура çулталăкĕнче тĕллевлĕ ĕçленине палăртнăччĕ. Çывăх вăхăтри тĕллевсен шутне вăл ун чухне «Пĕчĕк çеç путене» фестиваль тĕлне çăпата ташшине хатĕрлесе çитересси тенĕччĕ. Çакăнпа çеç лăпланса лармарĕç Элĕксем. «Валинке» ансамбль Пĕтĕм тĕнчери «Выля, хут купăс!» виççĕмĕш фестивале хутшăнчĕ, унтан лауреат ятпа таврăнчĕ.

Ялта çамрăксем пур-и е унта вăтам тата аслă ăрурисем çеç юлнă-и – кирек мĕнле пулсан та, ман шухăшăмпа, культура вучахĕ кирлех. Юрласа ташлама çеç мар. «Культура» ăнлав – нумай енлĕ, вăл хутшăнусен пур тытăмĕпе те çыхăннă, искусствăн, литературăн, музыкăн, живописĕн енĕсене çеç мар, хутшăну культурине те, ĕç тата производство культурине те пырса тивет.

■ **Надежда СМИРНОВА**



**Антонина АЛЕКСАНДРОВА, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Елчĕк район администрацийĕн культурăпа информаци тивĕçтерĕвĕн пай пуçлăхĕ:**

– Культура çулталăкне тахçантанпах кĕтнĕ. Хăй вăхăтĕнче асăннă отрасль патшалăх шайĕпе пурнăça кĕрекен «Вĕренӳ», «Сывлăх сыхлавĕ» тата ытти наци программи пекех тивĕçлĕ вырăн тупасса шаннăччĕ. Ун чухне ĕмĕтĕмĕр пурнăça кĕреймерĕ. Юлашки вăхăтра республикăра ял культурине çĕклес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ: тĕслĕх клубсем йĕркелеççĕ. Ун пеккисем районта – пиллĕк. Пĕтĕмпе культура учрежденийĕсем – 11, филиалсемпе пурĕ – 37.

Хальхи вăхăтра ял çыннисем клуба çĕнĕрен таврăнма пуçларĕç. Унта ĕçлекен коллективсене аслă ăрурисем çеç мар, ачасем те çӳреççĕ. Кĕçĕн çултисем валли ятарлă ушкăнсем ĕçлеççĕ, тин çеç мăшăрланнисем валли «Çамрăк çемье» клубсем уçнă.

Районта 300 вырăнлă пысăк клубсем пурччĕ, вĕсене реконструкциленĕ, спорт залĕсем уçнă. Çавна май пушă ларакан клуб çук. Виçĕ ялта прокат лапамĕ ĕçлет.



**Елена ЧЕРНОВА, Муркаш район администрацийĕн культурăпа архив пайĕн пуçлăхĕ:**

– Яллă вырăнта культура учрежденийĕсем питĕ кирлĕ. Хальхи вăхăтра чылай ялта шкулсем хупăннă, клубсене те пĕтерсен мĕн юлать вара унта? Паян пирĕн районта 47 культура учрежденийĕ, 30 библиотека тата 3 музей. Асăннă тытăмра 180 яхăн çын ĕçлет. Муркаш хутлăхĕнче «халăх» ята тивĕçнĕ коллективсем республикăра чи нумайăи – 13. Пултарулăх ушкăнĕсен смотр-конкурсне çулленех ирттеретпĕр. Унта хутшăнакансен йышĕ кашнинчех ӳссе пырать.



**Анна ВАСИЛЬЕВА, Вăрнар районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи культурăпа кану центрĕн ертӳçи:**

– Клубсăр ялта пурăнма питĕ кичем пулĕ. Вăл кирек хăш ăрури çынна та хăй патне туртать. Пирĕн районти 61 клубпа культура çуртĕнче Культура çулталăкĕнче вун-вун мероприяти иртет. Хальхи вăхăтра районти культурăпа кану центрĕн фойинче культура тытăмĕнче ĕçлесе чапа тухнă çынсен сăн ӳкерчĕкĕсен куравĕ пырать. Юпа уйăхĕн вarринче район центрĕнчи «Тивлет» ансамбль йĕркеленнĕренпе 45 çул çитнине халалланă пысăк концертпа çĕнĕ сезона уçăпăр.

## Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче 2014 çулхи юпа уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе ЙЫШĂНМАЛЛИ КУНСЕМ

**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене тата скобкăра вăхăтне кăтартнă/**

| | | |
|---|---|---|
| **14 /10-00/** | **Ю.А.ПОПОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ |
| **16 /10-00/** | **А.П.КНЯЗЕВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Бюджет, финанс тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **16 /15-00/** | **О.В.МЕШКОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **15 /14-00/** | **П.С.КРАСНОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **07 /10-00/** | **Н.В.МАЛОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |

Граждансене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăну пӳлĕмĕнче 10 сехетрен пуçласа 17 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10-мĕш çурт, 3-мĕш пӳлĕм. Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-67.

çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ хыççăн ирттерме палăртнă суйлавсене ирттернĕ май пуçланнă право хутшăнăвĕсем тĕлĕшпе усă кураççĕ.

7. Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" 2006 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 9 №-лĕ саккунĕн /çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ/ 31 статйин 1-мĕш пайĕн, 32 статйин 4-мĕш пайĕн, 35 статйин 10-мĕш пайĕн 6-мĕш пункчĕн тата 12-мĕш пайĕн, 58 статйин 4-мĕш пайĕн, 60 статйин 8-мĕш пайĕн положенийĕсемпе Федерацин "Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 19-ФЗ №-лĕ саккунĕ вăя кĕнĕ кун хыççăн ирттерме палăртнă суйлавсене ирттернĕ май пуçланнă право хутшăнăвĕсем тĕлĕшпе усă кураççĕ.

8. Федерацин "Федерацин "Раççей Федерацийĕн гражданĕсен суйлав прависен тата референдума хутшăнмалли правин тĕп гарантийĕсем çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2014 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 95-ФЗ №-лĕ саккунĕ вăя кĕнĕ кун хыççăн ирттернĕ суйлавăн результачĕсене палăртнă чух Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ çинчен" 2006 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 9 №-лĕ саккунĕн /çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ/ 69 статйин 62-мĕш пайĕн тата 8-мĕш пайĕн 41-мĕш пункчĕн тата 691 статйин положенийĕсемпе усă курмаççĕ.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, авăн, 25, 48 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ЯЛ ХУÇАЛĂХНЕ АТАЛАНТАРАССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья. Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" 2006 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 264-ФЗ №-лĕ саккунне /малалла - Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕ/ тĕпе хурса ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем тесе йышăннă граждансемпе юридически сăпатсем, ытти граждансем, юридически сăпатсем, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас сферăра пулакан хутшăнусене йĕркелесе тăрать.

**2 статья. Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас сферăри хутшăнусене право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырасси**

Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас сферăри хутшăнусене право тĕлĕшĕнчен Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе, Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕпе, федерацин ытти саккунĕсемпе тата Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсемпе, Чăваш Республикин Конституцийĕпе, çак Саккунпа, Чăваш Республикин ытти саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин ытти нормативлă право акчĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелесе пыраççĕ.

**3 статья. Çак Саккунра усă куракан тĕп ăнлавсем**

Çак Саккунра усă куракан тĕп ăнлавсемпе Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕнче палăртнă пĕлтерĕшпех усă кураççĕ.

**4 статья. Чăваш Республикин патшалăх аграри политики**

1. Чăваш Республикин патшалăх аграри политики Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас ĕçе тĕпе хуракан Чăваш Республикин социаллă пурнăçĕпе экономики енĕпе тытса пыракан патшалăх политикин тытăмлă пайĕ пулса тăрать.

2. Чăваш Республикин патшалăх аграри политикин тĕп тĕллевĕсем çаксем пулса тăраççĕ:

1/ Чăваш Республикинче тухăçлă ял хуçалăх производствине аталантарасси;

2/ Чăваш Республикин территорийĕнче туса кăларнă ял хуçалăх продукцийĕн, ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсен конкуренци пултарулăхне ӳстересси, Чăваш Республикин территорийĕнче туса кăларнă апат-çимĕç таварĕсен пахалăхне тивĕçтересси;

3/ Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарассине, Чăваш Республикинчи ял халăхне ĕçе явăçтарассине тивĕçтерессине, унăн пурнăç шайне пысăклатасси, çав шутра ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене ĕçшĕн тӳлессине ӳстересси;

4/ Чăваш Республикин территорийĕнче ял хуçалăх производствин нушисем валли усă куракан çут çанталăк ресурсĕсене сыхласа хăварасси тата çĕнетсе пырасси;

5/ Чăваш Республикин территорийĕнче ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен тупăшлăхне ӳстерессине тивĕçтерекен ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварĕн тата апат-çимĕçĕн тухăçлă ĕçлекен рынокне йĕркелесси тата çав рынокăн инфратытăмне аталантарасси;

6/ Чăваш Республикин территорийĕнче инвестицин лайăх климатне туса хурасси тата Чăваш Республикинче ял хуçалăх тата агропромышленность комплексĕн сферинче инвестицисен калăпăшне пысăклатасси.

3. Чăваш Республикин патшалăх аграри политики çак принципсем çинче никĕсленсе тăрать:

1/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас ĕçре патшалăх пулăшăвĕпе усă курма майлă пулни, унпа ятран тата тĕллевлĕн тивĕçтерни;

2/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политики тата ăна пурнăçланин кăтартăвĕсем çинчен калакан информаципе уççăн паллашма май пулни;

3/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикин мерисене çирĕп йĕркепе тата гаранти парса пурнăçлани;

4/ бюджет укçи-тенкипе тухăçлă усă курни;

5/ ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен союзĕсем /ассоциацийĕсем/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине йĕркелеме тата пурнăçлама хутшăнни.

4. Чăваш Республикин патшалăх аграри политикин тĕп çул-йĕрĕсем:

1/ Чăваш Республикинче пурăнакансене Раççей апат-çимĕç таварĕсемпе, çав шутра Чăваш Республикин территорийĕнче туса кăларнисемпе çирĕппĕн тивĕçтерсе тăрасси;

2/ Чăваш Республикин территорийĕнче ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокне аталантарасси тата ăна йĕркелесе тăрасси, унăн инфратытăмне тата логистика тивĕçтерĕвне аталантарасси;

3/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас енĕпе патшалăх пулăшăвне парасси;

4/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас енĕпе наукăна тата инноваци ĕç-хĕлне аталантарасси;

5/ Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас ĕçе пулăшасси;

6/ ял хуçалăхĕ валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлекен тата хушма професси пĕлĕвĕ паракан тытăма лайăхлатасси, ăста кадрсене ялта çирĕплеме пулăшасси.

**5 статья. Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçламалли полномочийĕсем**

1. Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçлас енĕпе Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн полномочийĕсен шутне Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас енĕпе Чăваш Республикин саккунĕсене йышăнасси тата Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе унăн компетенцийĕ шутне кĕртнĕ ытти полномочисем кĕреççĕ.

2. Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçлас енĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас енĕпе хăйĕн компетенцийĕн шайĕнче Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене йышăнасси;

2/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас тата Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарас енĕпе патшалăх енчен пулăшмалли йĕркене çак Саккунпа килĕшӳллĕн палăртасси;

3/ ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ çирĕплетесси, ăна пурнăçлассине тивĕçтересси;

4/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçлама полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органне /малалла - полномочиллĕ орган/ палăртасси;

5/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокне йĕркелесе тăрасси;

6/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх енĕпе информаципе тивĕçтермелли ĕç-хĕле йĕркелесе пырасси;

7/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн унăн компетенцийĕ шутне кĕртнĕ ытти полномочисем.

3. Полномочиллĕ орган полномочийĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçласси;

2/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас ĕçре федерацин агропромышленность комплексĕ енĕпе патшалăх политикине туса хатĕрлекен тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пыракан ĕç тăвакан влаçĕн органĕпе çыхăнса ĕçлесси;

3/ ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ туса хатĕрлесси тата пурнăçласси;

4/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх енĕпе информаци парса тăрас ĕçе пурнăçласси, çав шутра "Интернет" информаципе телекоммуникаци сетĕнчи Чăваш Республикин Власть органĕсен порталĕнчи официаллă сайтра Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕн 17 статйинче кăтартнă информацие вырнаçтарасси;

5/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн унăн компетенцийĕ шутне кĕртнĕ ытти полномочисем.

**6 статья. Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçламалли мерăсем**

Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçлама çак мерăсемпе усă кураççĕ:

1/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене бюджет укçи-тенкине уйăрса пани;

2/ ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене Раççей Федерацийĕн налуксемпе пуçтарусем çинчен калакан саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин налуксем çинчен калакан саккунĕсемпе килĕшӳллĕн налук çăмăллăхĕсем пани;

3/ Чăваш Республикин тата муниципалитет нушисене тивĕçтерме ял хуçалăх продукцине, чĕр таварне тата апат-çимĕçне туянас, упрас, тирпейлес тата парса тăрас ĕçсене пурнăçлани;

4/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокне аталантарма тата йĕркелесе тăма пулăшни;

5/ ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокне ытти хутшăнакансене информаципе тивĕçтерсе тăни, çавăн пекех вĕсене консультаци парса пулăшни;

6/ общество организацийĕсем Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине йĕркелеме тата пурнăçлама хутшăнни;

7/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе пăхса хăварнă ытти мерăсем.

**7 статья. Чăваш Республикинче ял хуçалăхне тата агропромышленность комплексне аталантарас ĕçре патшалăх енчен пулăшмалли тĕп çул-йĕрсем**

1. Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас ĕçре патшалăх енчен пулăшассине çак тĕп çул-йĕрсемпе тивĕçтереççĕ:

1/ ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене кредитсем уйăрса паракан тытăма пулăшса;

2/ ял хуçалăх страхлавĕн тытăмне аталантарса;

3/ выльăх-чĕрлĕх отраслне /çав шутра ăратлă выльăх-чĕрлĕхе, ашлăх тата сĕт-çулăх выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕк тата выльăх-чĕрлĕхĕн ытти çум отраслĕсене/ аталантарса;

4/ ӳсен-тăран отраслне /çав шутра элита вăрлăх, хăмла, ӳсен-тăранăн ытти çум отраслĕсене/ аталантарса;

5/ ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсене сыхлас тата вĕсен пулăхлăхне ӳстерес енĕпе ĕçсем пурнăçлассине тивĕçтерсе;

6/ хресчен /фермер/ хуçалăхĕсене тата харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕсене аталантарма тата тухăçлă ĕçлеме условисем туса;

7/ Чăваш Республикин ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарма пулăшса;

8/ ял хуçалăх кооперацине аталантарса;

9/ машинăпа технологи станцийĕсене /комплексĕсене/ аталантарса;

10/ ял хуçалăхĕ валли рынок инфратытăмне аталантарма пулăшса;

11/ ял хуçалăхне аталантарас енĕпе инноваци ĕç-хĕлне тата наука вăй-хăватне аталантарса, наука тĕпчевĕсем туса ирттерсе;

12/ Чăваш Республикинче органикăллă апат-çимĕç туса кăларса;

13/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине пурнăçланă чухне информаципе тивĕçтерсе;

14/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă ытти çул-йĕрсемпе.

2. Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕпе агропромышленность комплексне аталантарас енĕпе патшалăх енчен пулăшас ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе Чăваш Республикин ял хуçалăхне аталантарас енĕпе патшалăх программин мероприятийĕсен /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисен/ шайĕнче тивĕçтереççĕ.

3. Чăваш Республикинче ял хуçалăхне тата агропромышленность комплексне аталантарас енĕпе патшалăх енчен пулăшма Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкине Чăваш Республикин Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕпе асăннă тĕллевсем валли пăхса хăварнă укçа-тенкĕ шайĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртнă йĕркепе тата условисемпе уйăрса параççĕ.

**8 статья. Ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программи /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисем/**

1. Ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ ял хуçалăхне аталантармалли тата Чăваш Республикинче ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокне йĕркелесе тăмалли вăрах е вăтам вăхăтлăх тапхăрти тĕп çул-йĕрсене, укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли тата йышăнса хăваракан ĕçсене пурнăçламалли майсене палăртас тĕллевпе туса хатĕрлеççĕ.

2. Ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн туса хатĕрлеççĕ, çирĕплетеççĕ тата пурнăçлаççĕ.

**9 статья. Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене кредит паракан тытăма патшалăх енчен пулăшасси**

1. Чăваш Республикинче ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене кредит паракан тытăма йĕркелеме тата аталантарма пулăшассине, ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсем ял хуçалăхне аталантарма Раççейри кредит организацийĕсенче, потребительсен ял хуçалăх кредит кооперативĕсенче пĕрешкел майпа кредитсем /заемсем/ илессине тивĕçтереççĕ.

2. Раççейри кредит организацийĕсенче тата потребительсен ял хуçалăх кредит кооперативĕсенче ял хуçалăхне аталантарма илнĕ кредитсем /заемсем/ енĕпе процентсем тӳленипе пулакан тăкаксен пĕр пайне саплаштарма Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен субсидисем уйăрса памалли йĕркене тата условисене, кредитсен /заемсен/ тĕсĕсене, вĕсене уйăрса памалли сроксене, кредитсемпе усă курмалли майсене /вĕсен енĕпе процентсем тӳленипе пулакан тăкаксен пĕр пайне Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен саплаштараççĕ/ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

**10 статья. Патшалăх пулăшнипе пурнăçлакан ял хуçалăх страхлавĕ**

1. Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларассипе çыхăннă пурлăх интересĕсене страхлав хӳтĕлевĕпе тивĕçтернĕ чухне ял хуçалăх страхлавĕн сферинче патшалăх енчен пулăшмалли право никĕсĕсене Федерацин "Ял хуçалăх страхлавĕ енĕпе патшалăх пулăшасси çинчен тата Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2011 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 260-ФЗ №-лĕ саккунĕпе палăртаççĕ.

2. Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене ял хуçалăх страхлавĕ енĕпе патшалăх енчен пулăшмалли йĕркене Федерацин "Ял хуçалăх страхлавĕн сферинче патшалăх енчен пулăшасси çинчен тата Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2011 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 260-ФЗ №-лĕ саккунĕпе çирĕплетнĕ требованисемпе тата Раççей Федерацийĕн Правительстви çирĕплетнĕ пĕтĕмĕшле требованисемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

**11 статья. Ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен пулăхне сыхлас тата ӳстерес енĕпе пурнăçлакан ĕçсене патшалăх енчен пулăшасси**

1. Экологи шайлашăвне, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсене сыхлассине, вĕсен пулăхне ӳстерессине тивĕçтерме пулăшакан патшалăх политикине пурнăçлас тĕллевпе ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене ял хуçалăхне аталантармалли тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокĕсене йĕркелесе тăмалли патшалăх программипе палăртнă ĕçсене туса ирттерме, çав шутра удобренисемпе усă курассине хавхалантарма Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе çирĕплетнĕ полномочисемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн бюджет тытăмне кĕрекен мĕн пур шайри бюджетсен укçи-тенки шучĕпе патшалăх енчен пулăшу параççĕ.

2. Чăваш Республикин ял хуçалăхне аталантарас енĕпе патшалăх программипе /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисемпе/ пăхса хăварнă ял хуçалăх çĕрĕсен пулăхне ӳстермелли ĕçсен шайĕнче ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен пулăхне таврăракан ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене Чăваш Республикин Чăваш Республикин черетлĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе патшалăх енчен пулăшу параççĕ.

**12 статья. Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен союзĕсем /ассоциацийĕсем/ Чăваш Республикинче патшалăх аграри политикине йĕркелес тата пурнăçлас ĕçе хутшăнасси**

1. Полномочиллĕ орган Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине йĕркелес тата пурнăçлас ĕçе ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен союзĕсене /ассоциацийĕсене/ ирĕклĕ майпа явăçтарать.

2. Ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен союзĕсем /ассоциацийĕсем/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине йĕркелес тата пурнăçлас ĕçе çак майсемпе хутшăнма пултараççĕ:

1/ Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсен проекчĕсене, ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ туса хатĕрленĕ çĕре хутшăнса;

2/ ял хуçалăхне аталантарас енĕпе наукăпа техника çитĕнĕвĕсене, Раççейри тата ют çĕршыври опыта пĕтĕмлетес тата сарас ĕçе хутшăнса;

3/ Чăваш Республикин патшалăх аграри политикине йĕркелеме тата пурнăçлама кирлĕ информаципе тивĕçтерсе;

4/ Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем валли сĕнӳсем хатĕрлесе;

5/ Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн хутшăнмалли ытти майсемпе.

3. Çак статья положенийĕсене полномочиллĕ орган тата çак статьян 1-мĕш пайĕнче асăннă ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен союзĕсем /ассоциацийĕсем/ хушшинче тунă килĕшӳсене тĕпе хурса пурнăçлаççĕ.

**13 статья. Чăваш Республикинче ял хуçалăх енĕпе информаципе патшалăх тивĕçтерсе тăрасси**

1. Чăваш Республикинче ял хуçалăх енĕпе информаципе патшалăх тивĕçтерсе тăрассине Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.

2. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче ял хуçалăх енĕпе информаципе патшалăх тивĕçтерсе тăракан тытăмăн никĕсĕ - ял хуçалăхĕнчи лару-тăру тата унăн аталану туртăмĕсем çинчен пĕлтерекен, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен информаци тытăмĕсене вырнаçтаракан информаци пулса тăрать.

3. Чăваш Республикинче ял хуçалăх енĕпе информаципе патшалăх тивĕçтерсе тăракан тытăма çакăн çинчен пĕлтерекен информацие çирĕплетнĕ йĕркепе кĕртеççĕ:

1/ ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ пурнăçлани çинчен;

2/ Чăваш Республикинче ӳсен-тăран тата выльăх-чĕрлĕх отраслĕсен аталанăвĕн тăрăмĕ çинчен;

3/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх техникин шучĕ тата вăл мĕнлерех шайра пулни, топливо пырса тăни тата энергипе усă курни çинчен;

4/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсене химизацилени тата шăварни çинчен;

5/ Чăваш Республикинче ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен мониторингĕ çинчен;

6/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх организацийĕсен финанспа экономика ĕçĕ-хĕлĕнчи тăрăмĕ çинчен;

7/ Чăваш Республикин территорийĕнче фитосанитари тата выльăх чирĕ сарăлни тĕлĕшпе йĕркеленнĕ лару-тăру çинчен тата выльăх-чĕрлĕхпе ӳсен тăран чирĕсене, чĕр чунсен ерекен чирĕсене пуçаракансене, ӳсен-тăран сăтăрçисене тупса палăртас, пĕтерес тата сарăласран асăрхаттарас енĕпе пурнăçлакан ĕçсем çинчен;

8/ Чăваш Республикинче ял хуçалăх организацийĕсенче ĕçлекенсен шучĕ çинчен;

9/ Чăваш Республикинче апат-çимĕç продукчĕсем, çав шутра ĕçмесем туса кăларакан организацисен тăрăмĕ çинчен;

10/ ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç рынокĕнчи кирлĕ апат-çимĕçĕн тата пурлăхпа техника ресурсĕсен хакĕсен мониторингĕн кăтартăвĕсем çинчен;

11/ Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕн 17 статйин 3-мĕш пайĕпе палăртнă ытти информаци.

4. Полномочиллĕ органăн "Интернет" информаципе телекоммуникаци сетĕнчи Чăваш Республикин власть органĕсен Порталĕнчи официаллă сайтĕнче кварталта пĕр хутран кая мар çĕнетсе тăракан тата çакăн çинчен пĕлтерекен информацие вырнаçтараççĕ:

1/ полномочиллĕ орган ял хуçалăхне аталантарас енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программине /Чăваш Республикин патшалăх программин çум программисене/ пурнăçлас енĕпе тунă йышăнусем çинчен;

2/ Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем ял хуçалăхне тата агропромышленность комплексне аталантарас енĕпе патшалăх пулăшăвĕ парассине пурнăçламалли йĕркене çирĕплетекен Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсене пичетлесе кăларни çинчен;

3/ Чăваш Республикинче чи кирлĕ ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç тĕсĕсене туса кăларассине тата сутассине прогнозлакан тата чăннипе туса кăларнă тата сутнă кăтартусем /ял хуçалăх культурисене акни тата вĕсене пухса кĕртни, выльăх шучĕ, туса илекен сĕт тата ял хуçалăхĕн ытти продукцийĕн калăпăшĕ çинчен кашни уйăхра тăвакан отчетсем/ çинчен;

4/ ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем сутнă ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварĕн тата апат-çимĕçĕн вăтам хакĕ, вĕсем туяннă промышленность продукцийĕн тата уйрăм апат-çимĕç таварĕсен хакĕ çинчен;

5/ Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕн кăтартăвĕсене регион шайĕнче пĕтĕмлетни çинчен;

6/ Чăваш Республикин нушисем валли ял хуçалăх продукцийĕ, чĕр тавар тата апат-çимĕç парса тăма тендерсем ирттересси çинчен;

7/ Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕн 17 статйин 4-мĕш пайĕпе палăртнă ытти информаци çинчен.

5. Çак статьян 4-мĕш пайĕнче кăтартнă информаципе тӳлевсĕр тивĕç-тереççĕ. Интересленекен мĕн пур çынна унпа усă курма пĕр тан майсем туса параççĕ.

**14 статья. Пĕтĕмлетӳ положенийĕсем**

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

2. Çак Саккун вăя кĕнĕ кунран пуçласа хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас:

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин агропромышленность комплексне патшалăх йĕркелесе тăрасси тата пулăшасси çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 35 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2001, 42 №/;

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин хăш-пĕр саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси тата Чăваш Республикин саккунĕсен акчĕсен уйрăм положенийĕсем хăйсен вăйне çухатни çинчен" 2006 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 36 №-лĕ саккунĕн /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 70 №/ 3 статйи;

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин агропромышленность комплексне патшалăх йĕркелесе тăрасси тата пулăшасси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 61 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 72 №/;

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин хăш-пĕр саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2008 çулхи юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнчи 52 №-лĕ саккунĕн /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2008, 77 №/ 4 статйи;

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2014 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 18 №-лĕ саккунĕн /Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 3 №/ 3 статйи.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, авăн, 29, 49 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ИНВЕСТИЦИ ĔÇ-ХĔЛНЕ ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшасси çинчен" 2004 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 8 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 59, 61 №-сем; 2006, 70 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77 №-сем; 2009, 83 №; 2010, 87 №; 2011, 91 №; 2012, 92 № /I том/; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 6, 11 №-сем/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 4 статьяра:

а/ 1-мĕш пайăн вун пиллĕкмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин харпăрлăхĕнчи" сăмахсене "Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи" сăмахсемпе улăштарас;

ă/ çакăн пек çырса 1¹-мĕш пай хушса хурас:

"1¹. Чăваш Республикинче ют çĕршыв инвесторĕсене патшалăх енчен пулăшассине Чăваш Республикин экономикине ют çĕршыв инвестицийĕсене явăçтарасси çинчен калакан Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.";

б/ 2-мĕш пайăн пиллĕкмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2/ 5 статьян 1-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи капиталлă строительство объекчĕсене Чăваш Рес-публикин республика бюджетĕнчен бюджет инвестицийĕсем, вырăнти бюджетсенчен бюджет инвестицийĕсем хывакан муниципалитет харпăрлăхĕнчи капиталлă строительство объекчĕсене пĕрле укçа-тенкĕ уйăрма вырăнти бюджетсене субсидисем" сăмахсене "Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи объектсене укçа-тенкĕ хывмалли майпа бюджет инвестицийĕсем, Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи капиталлă строительство объекчĕсене укçа-тенкĕ хывма е Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне куçман пурлăх объекчĕсем туянма субсидисем, вырăнти бюджетсенчен укçа-тенкĕ хывакан муниципалитет харпăрлăхĕнчи объектсене укçа-тенкĕ хывассине пĕрле укçа-тенкĕ уйăрма вырăнти бюджетсене субсидисем" сăмахсемпе улăштарас;

3/ 8 статьяра:

а/ 1-мĕш пайра "Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи капиталлă строительство объекчĕсене бюджет инвестицийĕсем, çавăн пекех вырăнти бюджетсенчен бюджет инвестицийĕсем хывакан муниципалитет харпăрлăхĕнчи капиталлă строительство объекчĕсене пĕрле укçа-тенкĕ уйăрма вырăнти бюджетсене субсидисем" сăмахсене "Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи объектсене укçа-тенкĕ хывмалли майпа бюджет инвестицийĕсем, Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи капиталлă строительство объекчĕсене укçа-тенкĕ хывма е Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне куçман пурлăх объекчĕсем туянма субсидисем, вырăнти бюджетсенчен укçа-тенкĕ хывакан муниципалитет харпăрлăхĕнчи объектсене укçа-тенкĕ хывассине пĕрле укçа-тенкĕ уйăрма вырăнти бюджетсене субсидисем" сăмахсемпе улăштарас;

ă/ 2-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"2. Республикăн ятран паракан инвестици программин укçи-тенкине çакăн валли яраççĕ:

капиталлă строительство объекчĕсене тăвассине, юсаса çĕнетессине, çав шутра реставраци элеменчĕсемпе усă курса юсаса çĕнетессине е техника тĕлĕшĕнчен пуянлатассине пĕтĕмпех е пĕр пайне Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе тума палăртакан инвестици проекчĕсене пурнăçлама;

пĕтĕмпех е пĕр пайне Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе тӳлесе татма палăртса Чăваш Республикин харпăрлăхне куçман пурлăх объекчĕсем, çав шутра пурăнмалли çурт-йĕр туянма;

капиталлă строительство объекчĕсем тăвассине, юсаса çĕнетессине, çав шутра реставраци элеменчĕсемпе усă курса юсаса çĕнетессине е техника тĕлĕшĕнчен пуянлатассине тĕрлĕ майпа çыхăнтарса тăвакан мероприятисене /пысăклатнă инвестици проекчĕсене/ пурнăçлама, куçман пурлăх объекчĕсене туянма /малалла - мероприятисем /пысăклатнă инвестици проекчĕсем/.";

б/ 4-мĕш пайра "куçман пурлăх объекчĕсем, строительство, реконструкци валли" сăмахсене "куçман пурлăх объекчĕсем, строительство, реконструкци, çав шутра реставраци элеменчĕсемпе усă курса юсаса çĕнетме" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, авăн, 29, 50 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЭКОНОМИКИНЕ ЮТ ÇĔР-ШЫВ ИНВЕСТИЦИЙĔСЕНЕ ЯВĂÇТАРАССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Çак Саккун Чăваш Республикин экономикине ют çĕр-шыв инвестицийĕсене явăçтарнипе тата ют çĕр-шыв инвесторĕсене вĕсем Чăваш Республикин территорийĕнче инвестицисем тунă чухне çăмăллăхсем тата гарантисем парассипе çыхăннă хутшăнусене йĕркелет.

**2 статья**

Çак Саккун тĕллевĕсем валли çакăн пек тĕп ăнлавсемпе тата терминсемпе усă кураççĕ:

1/ инвестици проекчĕ - хывакан укçа-тенкĕн экономика усăлăхне, калăпăшне тата укçа-тенкĕ хывмалли сроксене çирĕплетсе пани, çав шутра Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн туса хатĕрленĕ кирлĕ проект докуменчĕсем, çавăн пекех инвестицисем тăвас енĕпе куллен пурнăçламалли ĕçсене çырса кăтартни /бизнес-план/;

2/ Чăваш Республикишĕн экономика тата социаллă пурнăç тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ инвестици проекчĕ - общество тата патшалăх интересĕсене палăртакан, Чăваш Республикинче пурăнакансен пурнăç пахалăхне ӳстерме пулăшакан инвестици проекчĕ;

3/ инвестици проекчĕн хăй хаклăхне кăларма палăртнă вăхăт - усă курнăшăн уйăрса пынă укçа-тенкĕн тата инвестици тăкакĕсен калăпăшĕпе таса тупăшăн перекетлесе пухнă сумминчен юлнă укçа-тенкĕ усă кӳме тытăннă кунран пуçласа инвестици проектне укçа-тенкĕпе тивĕçтерме пуçланă кун хушшинчи тапхăр;

4/ налуксен пĕтĕмĕшле виçи - инвестици проектне ют çĕр-шыв инвестицийĕсен шучĕпе пурнăçлакан ют çĕр-шыв инвесторĕ е ют çĕр-шыв инвестицийĕсемпе ĕçлекен коммерциллĕ организаци инвестици проектне укçа-тенкĕпе тивĕçтерме пуçланă кун тĕлне республика налукĕсем евĕр тӳлесе татмалли укçа-тенкĕн шутласа палăртнă пĕтĕмĕшле калăпăшĕ.

Ытти ăнлавсемпе тата терминсемпе Федерацин "Раççей Федерацийĕнче ют çĕр-шыв инвестицийĕсем çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 160-ФЗ №-лĕ саккунĕпе палăртнă пĕлтерĕшсемпе усă кураççĕ.

**3 статья**

Ют çĕр-шыв инвесторĕсене Чăваш Республикин территорийĕнче инвестицисем тунă чухне Федерацин "Раççей Федерацийĕнче ют çĕр-шыв инвестицийĕсем çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 160-ФЗ №-лĕ саккунĕпе пăхса хăварнă патшалăх гарантийĕсем параççĕ.

**4 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшасси çинчен" 2004 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 8 №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче ют çĕр-шыв инвесторĕсене патшалăх енчен пулăшас ĕçе çак майсемпе туса пыраççĕ:

Чăваш Республикин патшалăх гарантийĕсене конкурс никĕсĕ çинче парса;

налук çăмăллăхĕсене Чăваш Республикин налуксем çинчен калакан саккунĕсемпе килĕшӳллĕн парса;

патшалăхăн укçа-тенкĕпе çыхăнман пулăшăвне парса.

**5 статья**

1. Енчен те республика налукĕсен виçисене улăштаракан Чăваш Республикин саккунĕсем вăя кĕреççĕ е Чăваш Республикин саккунĕсене ют çĕр-шыв инвесторĕ тата ют çĕр-шыв инвестицийĕсемпе ĕçлекен коммерциллĕ организаци Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшăвĕ памалли приоритетлă çул-йĕрсемпе тӳр килекен инвестици проекчĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тăвакан ĕç-хĕлшĕн тӳлемелли налуксен пĕтĕмĕшле виçине, инвестици проектне ют çĕр-шыв инвестицийĕсен шутĕнчен укçа-тенкĕпе тивĕçтерме пуçланă кун тĕлне Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн вăйра тăнă пĕтĕмĕшле тӳлемелли налуксен виçипе танлаштарсан, ӳстерме пултаракан улшăнусем кĕртеççĕ пулсан, Чăваш Республикин çавнашкал саккунĕсемпе, çавăн пекех Чăваш Республикин саккунĕсене кĕртекен улшăнусемпе çавăн пек инвестици проекчĕ валли хăй хаклăхне кăларма палăртнă тапхăрта, анчах та инвестици проектне ют çĕр-шыв инвестицийĕсен шутĕнчен укçа-тенкĕпе тивĕçтерме пуçланă кунран пуçласа пилĕк çултан ытла мар вăхăтра усă курмаççĕ.

Енчен те Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшăвĕ памалли приоритетлă çул-йĕрсемпе тӳр килекен инвестици проектне пурнăçлакан, ют çĕр-шыв инвестицийĕсемпе ĕçлекен коммерциллĕ организацин устав /пухса хунă/ капиталĕнчи ют çĕр-шыв инвесторĕсен тӳпи, тӳписем /вклачĕ/ 25 процентран ытларах пулсан, çавнашкал организацие çак пайăн пĕрремĕш абзацĕн положенийĕсем пырса тивеççĕ.

2. Ют çĕр-шыв инвесторĕ тата ют çĕр-шыв инвестицийĕсемпе ĕçлекен коммерциллĕ организаци çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă тивĕçсене пурнăçламасть пулсан, вĕсем çак статьяпа килĕшӳллĕн хăйсене панă налук çăмăллăхĕсемпе усă курма пăрахаççĕ. Налук çăмăллăхĕсем панине пула тӳлемен укçа-тенкĕ суммине Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă йĕркепе каялла тавăрса памалла.

**6 статья**

1. Ют çĕршыв инвесторне çĕр лаптăкĕсемпе, çут çанталăкăн ытти пуянлăхĕпе, çуртсемпе, сооруженисемпе тата ытти куçман пурлăхпа усă курмалли право парас ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.

2. Çĕр лаптăкне арендăна парас тĕллевпе договор тумалли правăна ют çĕр-шыв инвестицийĕсемпе ĕçлекен коммерциллĕ организацине Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе пăхса хăварнă йĕркепе пама пултараççĕ.

3. Ют çĕр-шыв инвесторĕсем Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи объектсене приватизацилес ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă условисемпе тата йĕркепе хутшăнма пултараççĕ.

**7 статья**

1. Чăваш Республикин экономикине ют çĕр-шыв инвестицийĕсене явăçтарас енĕпе тăвакан ĕç-хĕле Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ инвестицисем явăçтарма условисем йĕркелес тĕлĕшпе патшалăх политикине туса хатĕрлеме тата пурнăçлама полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ /малалла - полномочиллĕ орган/ йĕркелесе тăрать.

2. Полномочиллĕ орган ют çĕр-шыв инвесторĕсене республикăри рынок тытăмĕ тата калăпăшĕ, инвестици проектне пурнăçлама кирлĕ ĕç, производство тата информаци ресурсĕсем çинчен пĕлтерсе тăрать.

3. Полномочиллĕ орган ют çĕр-шыв инвесторĕсене явăçтарас шутпа инвестици проекчĕ /инвестици площадкисем/ пурнăçланакан территорисен инфратытăмĕпе кадр вăй-хăвачĕн аталанăвне йĕркелесе пырать, Чăваш Республикишĕн экономикăпа социаллă пурнăç тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ инвестици проекчĕсене пулăшас ĕçе туса пырать.

4. Ют çĕр-шыв инвестицийĕсене тухăçлăн явăçтарас тĕллевпе полномочиллĕ орган патшалăх влаçĕн органĕсемпе тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе çыхăнса ĕçлет.

**8 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, авăн, 29, 51 №.

***Чăваш Республикин САККУНĔ***

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН НАЛУКСЕМПЕ ТӲЛЕВСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАКАН САККУНĔСЕМПЕ РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН СУБЪЕКЧĔСЕНЕ ШАНСА ПАНĂ НАЛУК ЙĔРКЕЛĔВĔН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЫЙТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2001, 42, 45 №-сем; 2002, 46, 49, 52 №-сем; 2003, 54, 57 №-сем; 2004, 59, 61 №-сем; 2005, 64, 65 №-сем; 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 87 №; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 96 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 22 статьяра:

а/ иккĕмĕш абзацра "туянни" сăмаха "туни /туянни/" сăмахсемпе улăштарас;

ă/ виççĕмĕш абзацра "2-мĕш пунктра" сăмахсене "иккĕмĕш абзацра" сăмахсемпе улăштарас;

б/ çакăн пек çырса тăваттăмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"5 миллиард тенкĕрен ытларах калăпăшпа инвестицисем явăçтаракан тата Чăваш Республикин территорийĕнче инвестици проекчĕсене пурнăçлакан организацисемшĕн инвестици проектне пурнăçланă шайра тунă /туяннă/ пурлăх тĕлĕшпе организацисен пурлăхĕнчен илекен налук ставкине инвестици проекчĕ хăйĕн хакне кăларичченхи пĕтĕм тапхăр валли, анчах та çăмăллăха илнĕ кунран пуçласа пилĕк çултан ытла мар вăхăта, 0,1 процент виçепе çирĕплетеççĕ. Çăмăллăхсем парассине çак статьян иккĕмĕш абзацĕнче палăртса хăварнă тĕслĕхсенче чарса лартаççĕ.";

в/ тăваттăмĕш абзаца пиллĕкмĕш абзац тесе шутлас;

2/ 36 статьяра таблицăна çакăн пек çырса хурас:

| "Налук хумалли объект ячĕ | Налук ставки, тенкĕ |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Çăмăл автомобильсем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 100 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт таран/ кĕртсе | 13 |
| 100 лаша вăйĕнчен ытла 150 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт ытла 110,33 кВт таран/ кĕртсе | 23 |
| 150 лаша вăйĕнчен ытла 200 лаша вăйĕ таран /110,33 кВт ытла 147,1 кВт таран/ кĕртсе | 50 |
| 200 лаша вăйĕнчен ытла 250 лаша вăйĕ таран /147,1 кВт ытла 183,9 кВт таран/ кĕртсе | 75 |
| 250 лаша вăйĕнчен ытла /183,9 кВт ытла/ | 150 |
| Мотоциклсем тата мотороллерсем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 20 лаша вăйĕ таран /14,7 кВт таран/ кĕртсе | 5 |
| 20 лаша вăйĕнчен ытла 35 лаша вăйĕ таран /14,7 кВт ытла 25,74 кВт таран/ кĕртсе | 12 |
| 35 лаша вăйĕнчен ытла /25,74 кВт ытла/ | 27 |
| Автобуссем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 200 лаша вăйĕ таран /147,1 кВт таран/ кĕртсе | 25 |
| 200 лаша вăйĕ ытла /147,1 кВт ытла/ | 54 |
| Груз турттаракан автомобильсем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 100 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт таран/ кĕртсе | 25 |
| 100 лаша вăйĕ ытла 150 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт ытла 110,33 кВт таран/ кĕртсе | 40 |
| 150 лаша вăйĕ ытла 200 лаша вăйĕ таран /110,33 кВт ытла 147,1 кВт таран/ кĕртсе | 50 |
| 200 лаша вăйĕ ытла 250 лаша вăйĕ таран /147,1 кВт ытла 183,9 кВт таран/ кĕртсе | 65 |
| 250 лаша вăйĕ ытла /183,9 кВт ытла/ | 85 |
| Ытти хăй тĕллĕн çӳрекен транспорт хатĕрĕсем, пневматикăллă тата гусеницăллă машинăсемпе механизмсем /кашни лаша вăйĕнчен/ | 16 |
| Юр тăрăх çӳрекен хатĕрсем, мотоçунасем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 50 лаша вăйĕ таран /36,77 кВт таран/ кĕртсе | 18 |
| 50 лаша вăйĕ ытла /36,77 кВт ытла/ | 37 |
| Катерсем, моторлă кимĕсем тата ытти шыв транспорт хатĕрĕсем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 100 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт таран/ кĕртсе | 30 |
| 100 лаша вăйĕ ытла /73,55 кВт ытла/ | 66 |
| Яхтăсем тата ытти паруслă-моторлă кимĕсем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 100 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт таран/ кĕртсе | 87 |
| 100 лаша вăйĕ ытла /73,55 кВт ытла/ | 130 |
| Гидроциклсем двигатель хăвачĕпе /кашни лаша вăйĕнчен/: | |
| 100 лаша вăйĕ таран /73,55 кВт таран/ кĕртсе | 74 |
| 100 лаша вăйĕ ытла /73,55 кВт ытла/ | 153 |
| Хăйсем тĕллĕн çӳремен /сĕтĕрсе çӳрекен/ кимĕсем, вĕсем валли пĕтĕм шăнăçтарма пултараслăха палăртаççĕ /пĕтĕм шăнăçтарма пултараслăхăн кашни регистр тоннинчен/ | 66 |
| Самолетсем, вертолетсем тата двигательлĕ ытти сывлăш карапĕсем /кашни лаша вăйĕнчен/ | 74 |

Реактивлă двигательсемлĕ самолетсем /туртăмăн кашни кило-грамм вăйĕнчен/ 61

Двигательсĕр ытти шыв тата сывлăш транспорт хатĕрĕсем /транспорт хатĕрĕн единицинчен/ 611";

3/ 38 статьян 3-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

4/ 39 статьяна çакăн пек çырса 3-мĕш пункт хушса хурас:

"3. Уйрăм предприниматель налук хумалли патент тытăмĕпе усă курса пурнăçлакан предприниматель ĕçĕ-хĕлĕн çак статьян 2-мĕш пунктĕнче палăртнă кашни тĕсĕ енĕпе çулталăкра илме пултаракан тупăш виçине Раççей Федерацийĕнче таварсен /ĕçсен, пулăшу ĕçĕсен/ потреблени хакĕсем улшăннине шута илекен, тивĕçлĕ календарлă çул валли çирĕплетнĕ коэффициент-дефлятор виçи чухлĕ çуллен индексацилемелле.".

**2 статья**

Çак Саккун 2015 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, анчах та ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа пĕр уйăх иртиччен маларах мар тата тивĕçлĕ налук енĕпе черетлĕ налук тапхăрĕн пĕрремĕш числинчен маларах мар вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 29, 52 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН РЕСПУБЛИКĂН ПУРЛĂХ РЕЗЕРВĔ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 7 ТАТА 10 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин республикăн пурлăх резервĕ çинчен" 2012 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 46 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 96 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 7 статьяра:

а/ ятне çакăн пек çырса хурас:

**"7 статья. Республика резервне хывакан пурлăха туянасси";**

ă/ 1-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"1. Республика резервне пурлăх парса тăмалли заказа Федерацин "Патшалăх тата муниципалитет нушисем валли таварсем, ĕçсем, пулăшу ĕçĕсем туянас сферăри контракт тытăмĕ çинчен" 2013 çулхи ака уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 44-ФЗ №-лĕ саккунĕ палăртнă йĕркепе вырнаçтараççĕ.";

2/ 10 статьян 1-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин патшалăх нушисемшĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин нушисене тивĕçтерме" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет тата 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 29, 53 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТĔРĔСЛЕВПЕ ШУТЛАВ ПАЛАТИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Тĕрĕслевпе шутлав палати çинчен" 2011 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 58 №-лĕ саккунне /Чăваш Рес-публикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2011, 91 №; 2012, 92 № /I том/; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 6 статьяра:

а/ 3-мĕш пайра "тата мăшăрĕсен ачисем" сăмахсене ", мăшăрĕсен ачисем тата ачисен мăшăрĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

ă/ çакăн пек çырса 7-мĕш тата 8-мĕш пайсем хушса хурас:

"7. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Тĕрĕслевпе шутлав палатин председателĕн, унăн мăшăрĕн тата çула çитмен ачисен Раççей Федерацийĕн территорийĕн тулашĕнче вырнаçнă ют çĕршывсен банкĕсенче счетсем /вкладсем/ уçма е тытса тăма, алăри укça-тенкĕне тата хаклă япаласене упрама, ют çĕршывсен финанс инструменчĕсене тытса тăма тата /е/ вĕсемпе усă курма право çук.

8. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Тĕрĕслевпе шутлав палатин председательне Федерацин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕпе тата федерацин ытти саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх должноçĕсене йышăнакан çынсем валли палăртнă чарусем, пӳлӳсем тата тивĕçсем пырса тивеççĕ.";

2/ 7 статьяра:

а/ 5-мĕш пая çакăн пек çырса 8-мĕш пункт хушса хурас:

"8/ Федерацин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 273-ФЗ №-лĕ саккунĕн 131 статйипе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче шанăçран тухсан.";

ă/ çакăн пек çырса 51-мĕш пай хушса хурас:

"$5^1$. Тĕрĕслевпе шутлав палатин председательне шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ирттернĕ тĕрĕслев /ăна ирттернĕ хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă/ кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн регламенчĕ палăртнă йĕркепе Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ пурнăçлать.";

3/ 20 статьян 7-мĕш пайĕн 3-мĕш пунктĕнче "професси тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме, вĕрентме тата квалификацине ӳстерме" сăмахсене "професси пĕлĕвĕ илме тата хушма професси пĕлĕвĕ илме" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 29, 54 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ НАГРАДИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин патшалăх наградисем çинчен" 2005 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 15 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 62 №; 2010, 85 №; 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 6 №; 2014, 3 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 2 статьяра:

а/ çакăн пек çырса хĕрĕхмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Чăваш Республикин тата тивĕçлĕ экологĕ";";

ă/ хĕрĕхмĕш - хĕрĕх виççĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн хĕрĕх пĕрремĕш - хĕрĕх тăваттăмĕш абзацсем тесе шутлас;

2/ 4 статьян тăваттăмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"Граждан тата çар тивĕçне пурнăçланă чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Чăваш Республикин патшалăх наградисемпе награды наградăлама, "Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ят пама, "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орденпа, "Юратупа шанчăклăхшăн" орденпа наградăлама малтан наградăланă вăхăта пăхмасăрах тăратма юрать.";

3/ 6 статьяра:

а/ улттăмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă/ çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Чăваш Республикин патшалăхăн пĕр наградипе тепĕр хут наградăламаççĕ.";

4/ 7 статьяна çакăн пек çырса абзацсем хушса хурас:

"Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ята тивĕçнĕ гражданссене "Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ят пани çинчен калакан паллă тата хисеп хучĕ параççĕ. "Юратупа шанчăклăхшăн" орденпа наградăланă мăшăрсене "Юратупа шанчăклăхшăн" орденпа наградăлани çинчен калакан пĕр паллă тата пĕр хисеп хучĕ параççĕ. "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орденпа, "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден медалĕпе, "Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн" мухтав паллипе наградăланă, Чăваш Республикин хисеплĕ ячĕсене тивĕçнĕ гражданссене Чăваш Республикин патшалăх наградисем çумне удостоверени параççĕ. Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă гражданссене унпа пĕрле кăкăр çине çакмалли паллă параççĕ.

Чăваш Республикин патшалăх наградисем çумне паракан удостоверенисен бланкĕсен тата "Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ят пани тата "Юратупа шанчăклăхшăн" орденпа наградăлани çинчен калакан хисеп хучĕсен тĕслĕхĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕпе çирĕплетеççĕ.";

5/ 8 статьяра:

а/ виççĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă/ пиллĕкмĕш абзацра "кăкăр çине çакмалли" сăмахсене кăларса пăрахас;

6/ 9 статьяра:

а/ иккĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă/ виççĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден паллине кăкăрăн сулахай енне, Раççей Федерацийĕн, СССР наградисем пур пулсан, вĕсем хыççăн вырнаçтараççĕ.";

7/ $9^1$ статьян иккĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

8/ 10 статьяра:

а/ иккĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă/ виççĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин Хисеп грамоти çумне панă кăкăр çине çакмалли паллăна кăкăрăн сылтăм енне, Раççей Федерацийĕн, СССР, РСФСР наградисем пур пулсан, вĕсем хыççăн вырнаçтараççĕ.";

9/ 11 статьяра:

а/ иккĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă/ виççĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден медальне кăкăрăн сулахай енне, "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден пур пулсан, ун хыççăн вырнаçтараççĕ.";

10/ 12 статьяра:

а/ çакăн пек çырса вăтăр виççĕмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

**"Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ экологĕ"** – çут çанталăка сыхлакан органсенче, ăслăлăх, вĕренӳ, общество тата производство организацийĕсенче 10 çултан сахал мар тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕ пысăк ăсталăхлă ĕçченсене тавралăха сыхлас ĕçе, тавралăх хутлăхĕ çине япăх витĕм кӳрессине чакарма палăртакан çут çанталăка сыхламалли хальхи вăхăтри технологисене туса хатĕрлес тата ĕçе кĕртес, çут çанталăкпа техноген инкекĕсен сиенĕсене пĕтерес, Чăваш Республикин территорийĕнче çут çанталăкпа биологи пуянлăхĕсене сыхласа хăварас тата ӳстерсе пырас ĕçсене, Чăваш Республикинчи халăха экологи воспитанийĕ парас тата çутта кăларас ĕçсен аталанăвне, экологи енĕпе ăста кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн;";

ă/ вăтăр виççĕмĕш - вăтăр пиллĕкмĕш абзацсене тивĕçлĕн вăтăр тăваттăмĕш - вăтăр улттăмĕш абзацсем тесе шутлас;

б/ вăтăр улттăмĕш абзаца вăтăр çиччĕмĕш абзац тесе шутлас тата ăна çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин хисеп ячĕсем çумне панă кăкăр çине çакмалли паллăна кăкăрăн сылтăм енне, Чăваш Республикин Хисеп грамоти çумне панă кăкăр çине çакмалли паллă пур пулсан, ун хыççăн вырнаçтараççĕ.";

в/ вăтăр çиччĕмĕш абзаца вăтăр саккăрмĕш абзац тесе шутлас;

11/ $12^1$ статьян иккĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

12/ 13 статьяра:

а/ пĕрремĕш абзаца "ял хуçалăхĕ," сăмахсем хыççăн "тавралăха сыхласси," сăмахсем хушса хурас;

ă/ виççĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

13/ 16 статьян пĕрремĕш абзацне "çавăн пекех" сăмахсем хыççăн "Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ" хисеплĕ ят çумне панă паллăна," сăмахсем хушса хурас;

14/ 1-мĕш хушса çырнинче:

а/ ятĕнче "кăкăр çине" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă/ пĕрремĕш абзацра "кăкăр çине çакмалли паллăна" сăмахсене "паллăна" сăмахпа улăштарас;

б/ иккĕмĕш тата тăваттăмĕш абзацсенче "кăкăр çине" сăмахсене кăларса пăрахас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 55 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АДМИНИСТРАТИВЛĂ ПРАВĂНА ПĂСНИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 55 №; 2005, 62, 64, 65 №-сем; 2006, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77, 78 №-сем; 2009, 81, 82 №-сем; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 88-91 №-сем; 2012, 92 /I том/, 94, 96 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 3 №; "Республика" хаçат, 2014, утă уйăхĕн 2-мĕшĕ/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ II сыпăка çакăн пек çырса $8^1$ тата $8^2$ статьясем хушса хурас:

**"$8^1$ статья. Патшалăх пулăшăвне памалли йĕркене пăсни**

1. Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн должноçри çынни, вырăнти хăй тытăмлăх органĕн должноçри çынни Чăваш Республикин саккунĕсемпе панă патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене пурнăçланă чухне Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсемпе палăртнă патшалăх пулăшăвне памалли йĕркене пăсни заявлени паракана патшалăх пулăшăвне памасăр хăварасси е патшалăх пулăшăвне палăртнă сроксене пăсса парасси патне илсе çитерсен, çак статьян 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, енчен те çак ĕçсенче /ĕçлеменнинче/ уголовнăй йĕркепе айăпламалли сăлтав çук пулсан, –

асăрхаттарса хăвараççĕ е виçĕ пинрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

2. Çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă çынсем патшалăх пулăшăвне пама Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртман документсем тата /е/ тӳлев ыйтнăшăн, енчен те çак ĕçсенче уголовнăй йĕркепе айăпламалли сăлтав çук пулсан, -

пилĕк пинрен пуçласа вунă пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

3. Çак статьян 1-мĕш е 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă административлă право йĕркине маларах çав майлах пăснине пула административлă йĕркепе айăпланă çын административлă право йĕркине пăснăшăн -

вунă пинрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

Асăрхаттарни. çак статьяпа Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсене е вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене панă Раççей Федерацийĕн полномочийĕсене пурнăçланă шайра паракан патшалăх пулăшăвне памалли йĕрке тĕлĕшпе усă курмаççĕ, енчен те асăннă патшалăх пулăшăвне панипе пулакан хутшăнусене нормативлă право тĕлĕшĕнчен Раççей Федерацийĕн нормативлă право акчĕсемпе йĕркелесе пыраççĕ пулсан.

**$8^2$ статья. Муниципалитет пулăшăвне памалли йĕркене пăсни**

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕн должноçри çынни вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен нормативлă право акчĕсемпе палăртнă муниципалитет пулăшăвне памалли йĕркене пăсни заявлени паракана муниципалитет пулăшăвне памасăр хăварасси е муниципалитет пулăшăвне палăртнă сроксене пăсса парасси патне илсе çитерсен, çак статьян 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, енчен те çак ĕçсенче /ĕçлеменнинче/ уголовнăй йĕркепе айăпламалли сăлтав çук пулсан, -

асăрхаттарса хăвараççĕ е виçĕ пинрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

2. Çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă çын муниципалитет пулăшăвне пама вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен нормативлă право акчĕсемпе пăхса хăварман документсем тата /е/ тӳлев ыйтнăшăн, енчен те çак ĕçсенче уголовнăй йĕркепе айăпламалли сăлтав çук пулсан, -

пилĕк пинрен пуçласа вунă пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

3. Çак статьян 1-мĕш е 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă административлă право йĕркине маларах çав майлах пăснине пула административлă йĕркепе айăпланă çын административлă право йĕркине пăснăшăн -

вунă пинрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.";

2/ $32^1$ статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3/ 33 статьян 2-мĕш пайĕнче:

а/ "а" пунктăн виççĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă/ "в" пунктра:

пĕрремĕш абзаца "$6^1$," цифрăсем хыççăн "$8^2$," цифрăсем хушса хурас, ", $32^1$" цифрăсене кăларса пăрахас;

саккăрмĕш абзацра ", $32^1$" цифрăсене кăларса пăрахас;

б/ "д" пункт хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

в/ çакăн пек çырса "м" пункт хушса хурас:

"м/ Чăваш Республикинче административлă чăрмавсене чакарас, патшалăх тата муниципалитет паракан пулăшу ĕçĕсене вырăнлăрах тăвас тата вĕсен пахалăхне ӳстерес тĕллевпе мероприятисем хатĕрлес тата пурнăçлас енĕпе Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен ĕçне-хĕлне методика тĕлĕшĕнчен ертсе тата йĕркелесе пыма полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн ертӳçин çумĕ; пай пуçлăхĕ; сектор заведующийĕ; консультанчĕ; тĕп специалист-эксперчĕ - çак Саккунăн $8^1$ статйипе пăхса хăварнă административлă право йĕркине пăснисем çинчен.";

4/ 34 статьяра:

а/ 1-мĕш пая "$6^2$," цифрăсем хыççăн "$8^1$, $8^2$," цифрăсем хушса хурас;

ă/ 2-мĕш пайăн иккĕмĕш абзацĕнче "электронлă цифра пичечĕпе" сăмахсене "квалификаци йĕркипе вăйлатса электронлă алă пуснипе" сăмахсемпе улăштарас;

б/ 10-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 56 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "АДМИНИСТРАТИВЛĂ КОМИССИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 1 ТАТА 3 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Административлă комиссисем çинчен" 2003 çулхи çу уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 17 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 54 №; 2005, 65 №; 2010, 84 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 12 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 1 статьян 3-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕнче "электронлă цифра пичечĕпе" сăмахсене "квалификаци йĕркипе вăйлатса электронлă алă пуснипе" сăмахсемпе улăштарас;

2/ 3 статьян 1-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕнче "электронлă майпа алă пуснине" сăмахсене "квалификаци йĕркипе вăйлатса электронлă алă пуснипе усă курма" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 57 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ВĂРМАНСЕНЕ СУТМАЛЛИ-ИЛМЕЛЛИ ДОГОВОРСЕН НИКĔСĔ ÇИНЧЕ ТĔШ ЙЫВĂÇ ТАТА ЛĂСĂЛЛĂ ЙЫВĂÇСЕМ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ УЙРĂМ ТĔСЛĔХСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 1 СТАТЙИН 1-МĔШ ПУНКЧĔ ХĂЙĔН ВĂЙНЕ ÇУХАТНИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Вăрмансене сутмалли-илмелли договорсен никĕсĕ çинче тĕш йывăç тата лăсăллă йывăçсем хатĕрлемелли уйрăм тĕслĕхсем çинчен" 2011 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 20 №-лĕ саккунĕн /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2011, 90 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 12 №/ 1 статйин 1-мĕш пункчĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 58 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "МУНИЦИПАЛИТЕТ ХАРПĂРЛĂХĔНЧИ ПУРЛĂХА МУНИЦИПАЛЛĂ РАЙОНСЕМ ТАТА ПОСЕЛЕНИСЕМ ХУШШИНЧЕ УЙĂРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Муниципалитет харпăрлăхĕнчи пурлăха муниципаллă районсем тата поселенисем хушшинче уйăрасси çинчен"

2006 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 48 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 71 №; 2008, 76, 78 №-сем; 2009, 82 №; 2011, 88 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 2 статьян виççĕмĕш абзацĕнче "федераци саккунĕсем" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн саккунĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

2/ 3 статьян 1-мĕш пайĕнче "федераци саккунĕсем" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн саккунĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

3/ 4 статьяра:

а/ 2-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацне "çак Саккун" сăмахсем хыççăн ", çак статьян $2^1$-мĕш пайĕнче палăртнă сăлтавсемсĕр пуçне," сăмахсем хушса хурас;

ă/ $2^1$-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"$2^1$. Муниципаллă районăн тата /е/ поселенин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çак Саккунпа çирĕплетнĕ муниципалитет пурлăхĕн перечене кĕртмен муниципалитет пурлăхне тупса палăртнă чухне асăннă пурлăха муниципаллă районăн харпăрлăхĕнчен поселени харпăрлăхне памалли тупса палăртнă муниципалитет пурлăхĕн перечене çинчен /малалла çавăн пекех – перечень/ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе çав йышăнăва кăларнă самантран пуçласа виçĕ уйăх хушшинче çак статьян 1-мĕш пайĕпе, 2-мĕш пайĕн иккĕмĕш-тăваттăмĕш абзацĕсемпе тата 3-мĕш пайĕпе çирĕплетнĕ йĕркепе куçарса параççĕ.";

4/ 5 статьяра:

а/ ятĕнче "памалли" сăмах хыççăн "муниципаллă районăн харпăрлăхĕнчен" сăмахсем хушса хурас;

ă/ 1-мĕш пайра "поселени харпăрлăхне памалли тупса палăртнă муни-ципалитет пурлăхĕн переченьне /малалла - перечень/" сăмахсене кăларса пăрахас;

б/ 2-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"2. Перечене, çавăн пекех ун пирки килĕшсе татăлни çинчен тунă муниципаллă районăн тата поселенин тивĕçлĕ представительлĕ органĕсен йышăнăвĕсене муниципаллă районăн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем Чăваш Республикин патшалăх пурлăхне тытса тата йĕркелесе пыма полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органне /малалла - полномочи панă орган/ пĕрле çĕлесе хурса тата номерлесе, пичет çапса çирĕплетсе, килĕшсе татăлнă самантран пуçласа пилĕк кун хушшинче хут çине тата электронлă хатĕрсем çине çырса, каярахпа Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе çирĕплетме, тăратаççĕ.";

в/ 3-мĕш пайра "Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" саккунĕн" сăмахсене "Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕн" сăмахсемпе улăштарас;

г/ 4-мĕш пайра "çак Саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен Чăваш Республикин саккунĕн проектне" сăмахсене "перечене çирĕплетни çинчен Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕн проектне илнĕ хыççăн 60 кун хушшинче хатĕрлет тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне ярса парать" сăмахсемпе улăштарас;

5/ 6 статьян 1-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"Çак Саккунăн 4 статйин $2^1$-мĕш пайĕнче кăтартнă поселени пурлăхĕн харпăрлăх прави Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн перечене çирĕплетни çинчен тунă йышăнăвĕ вăя кĕнĕ самантран пуçласа вăя кĕрет.".

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 59 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ДЕПОРТАЦИЛЕМЕЛЛИ Е РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔНЧЕН АДМИНИСТРАТИВЛĂ ЙĔРКЕПЕ КĂЛАРСА ЯМАЛЛИ ЮТ ÇĔР-ШЫВ ГРАЖДАНĔСЕНЕ ТАТА ГРАЖДАНЛĂХСĂР ÇЫНСЕНЕ ПĂХСА УСРАМА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ЯТАРЛĂ УЧРЕЖДЕНИ ТУСА ХУМАЛЛИ ЙĔРКЕ ÇИНЧЕН" САККУНĔ ХĂЙĔН ВĂЙНЕ ÇУХАТНИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Депортацилемелли е Раççей Федерацийĕнчен административлă йĕркепе кăларса ямалли ют çĕр-шыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене пăхса усрама Чăваш Республикинче ятарлă учреждени туса хумалли йĕрке çинчен" 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи

74 №-лĕ саккунĕ /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 92 № /I том/ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 60 №.

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇУТ ÇАНТАЛĂКĂН СИПЛĔХЛĔ ПУЯНЛĂХĔСЕМ, СИПЛЕВПЕ СЫВЛĂХА ÇИРĔПЛЕТМЕЛЛИ ВЫРĂНĔСЕМ ТАТА КУРОРЧĔСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин çут çанталăкăн сип-лĕхлĕ пуянлăхĕсем, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнĕсем тата курорчĕсем çинчен" 2003 çулхи авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнчи 24 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 56 №; 2005, 62 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2012, 94 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5№/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ кӳртĕмĕн пĕрремĕш абзацĕнче "çут çанталăкăн" сăмахсене кăларса пăрахас;

2/ 1 статьян тăваттăмĕш-улттăмĕш тата тăххăрмĕш абзацĕсенче "çут çанталăкăн" сăмахсене кăларса пăрахас;

3/ 4 статьян тăваттăмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

4/ 5 статьян пиллĕкмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

5/ 6 статьян тăваттăмĕш абзацĕнче "поселени территорийĕнче" сăмахсене "муниципалитет пĕрлĕхĕн территорийĕнче" сăмахсемпе улăштарас;

6/ 7 статьян пиллĕкмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"Чăваш Республикин çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсене, сиплевпе сывлăха çирĕплетмелли вырăнĕсене тĕпчесе пĕлмелли тата вĕсемпе усă курмалли, курортсене сыхласа хăвармалли тата аталантармалли патшалăх программисене /Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене/ туса хатĕрлесси тата вĕсене йĕркелесе тăрасси, çавăн пекех Чăваш Республикин курортсене аталантармалли патшалăх программисене /Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене/ пурнăçлассине тивĕçтересси;";

7/ 10 статьяра:

а/ ятĕнче "çут çанталăкăн пуянлăхĕсене" сăмахсене "çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

ă/ çут çанталăкăн пуянлăхĕсене" сăмахсене "çут çанталăкăн сиплĕхлĕ пуянлăхĕсене" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, авăн, 30, 61 №.

ĂСТА

# Ырă кăмăлĕшĕн хисеплеççĕ



Ăна эпĕ темиçе çул каялла Етĕрне хулинче ял хуçалăх ĕçченĕсен канашлăвĕ умĕн курнăччĕ. Районти ал ĕç ăстисем тĕрлесе-эрешлесе, йывăçран касса, ытти енĕпе майлаштарнă япалисене хăнасене кăтартма илсе пынăччĕ. Янăм ялĕнчи Алексей Ятрушев пĕр пăтасăр пуçтарнă Успени чиркĕвĕн макетне куракан уйрăмах йышлăччĕ. Тыткалама çепĕç те илĕртӳллĕ ывăс, шкатулка темĕн чухлехчĕ. Çавăн чухне манăн хăйĕнпе тĕл пулса пултарулăхĕпе çывăхрах паллашас кăмăл çуралчĕ.

Профессийĕпе йывăça каскаласа чун кĕртес киленӳрен аякра тăрать вăл. Вăтам шкул хыççăн Чăваш патшалăх пединститутĕн музыка факультетне пĕтернĕ. Пĕр хушă шкулта ĕçленĕ. Çав вăхăтрах çамрăка романтика илĕртнĕ. Пурăнма Çĕнĕ Шупашкара куçнă. Кунта вăл пачах урăх профессипе ĕçлеме тытăннă. Пушар чаçĕн инспекторĕ пулса тăнă, ăна тӳрех лейтенант званийĕ панă. Кунта музыка енĕпе çут çанталăк панă талантне сӳнтерме вуçех шухăшламан. Пултарулăх ушкăнĕнче малалла туптанă çеç.

Çемье çавăрнă. Мăшăрĕпе Нина Егоровнăпа икĕ ывăл çитĕнтернĕ. Пиччĕшĕ те, шăллĕ те Тăван çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе чыслă пурнăçланă, çарта пĕри тинĕс пехотинче хĕсметре тăнă, тепри связист пулнă.

Ашшĕн илемлĕх тĕнчине кăмăллас туртăмĕ аслă ывăлне куçнă. Вăл ача чухнех ӳкерме юратнă, ятарлă шкулта пĕлӳ илнĕ. Унăн картинисем халĕ кил-çурта илем кӳреççĕ.

Алексей Степановичăн йывăçа каскалас туртăмĕ вăй илсех пынă. Пĕррехинче «Наука и жизнь» журналта интереслĕ схема-чертеж асăрханă. Уçма тата хупма пысăк вăрттăнлăх упракан пĕчĕк арчана унăн питĕ ăсталас килнĕ.

– 500 ытла турăм ăна. Нумайăшне туссене парнелерĕм. Хăшĕ-пĕри пирус хума усă курать, тепри – урăх япала. Франципе Германире, Аслă Британипе Америкăра та пур. Вĕсене манăн ĕç питĕ килĕшнĕ, – тет Алексей Ятрушев.

Ял шкулне Андрей Афанасьев директор чĕннипе 2 çул каялла АПШран Джозеф Кинг хăнана килнĕ, ачасене ăсталăх класĕ кăтартнă. Ăста 2-3 сехетрех улмуççирен ăмăрт кайăк кӳлепи калăпланă. Унăн ĕçĕ шкулта паха экспонат вырăнĕнче халĕ те упранать.

Алексей Степановичпа Нина Егоровна тивĕçлĕ канăва тухсан ачисене хулари хваттерĕнче хăварса пурăнма яла куçнă. Кил хуçи пушă вăхăтра чун йăпатмăш иленĕвĕпе ытларах киленме тытăннă.

– Манăн асатте те, атте те таврари ялсенче хисеплекен платник-столяр пулнă. Çурт-йĕре илем кӳме, пӳрт çамки çавăрма пулăшнă, – тет Алексей Ятрушев. – Ĕлккенне курма, асăмра тытса юлма пултарасси мана вĕсенчен куçнă пулĕ. Алла çăка хăми, пĕр-пĕр ĕç хатĕрĕ тытмасан кун ахаль иртнĕн туйăнать.

– Аллине пăсмасть вăл. Паллă артист сăнарĕсене те калăплама мехел çитерет. Ăна кура эпĕ те вĕтĕ шăрçапа ӳкерчĕксем тума вĕрентĕм, – кăмăллă Нина Егоровна. – Ялти çынсем киле пырса чĕнеççĕ. Пĕри алăк тутарасшăн, тепри – чӳрече хашакĕ. Итлет, каять, кашнинех пулăшать. Унăн алли перĕнмен кил-çурт ялта çуках пулĕ. Ырă кăмăлĕшĕн, ылтăн аллишĕн çынсем тав туса пĕтереймеççĕ.

■ **В.ВАЛЕНТИНОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Большесундырского сельского поселения Ядринского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:24:180302:559 площадью 629000 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Ядринский район, Большесундырское с\пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429082, Чувашская Республика, Ядринский район, с. Большой Сундырь, ул.Советская, д.2а. Справки по тел: (83547)6-46-19.

Ядринская районная администрация сообщает, что по результатам открытого аукциона по продаже земельного участка категории "земли сельскохозяйственного назначения", проведенного 30.09.2014 г., победителем признан следующий участник:

Лот 1. В собственность за плату для разведения промысловых рыб, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Чебаковское, с кадастровым номером 21:24:000000:2645, площадью 2000 кв.м.; цена установленная торгами 16097 руб.; победитель - Краснов С.М.

ПРОДАЮ

**172.Гравмассу, керамблок,** песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу, щебень, керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**654.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Д-ка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**655.Кольца колодезные** – диам. 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Доставка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.




*Çын тата саккун*

# Криминаллă... ачалăхпа çамрăклăх

## Çул çитмен те – тимлĕх те çитмест-и?

***Çул çитменнисем тĕлĕшпе тунă преступленисем тата ачасемпе çамрăксем хăйсем тунисем. Çак ретри йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене паян Следстви комитечĕн подразделенийĕсем тĕпчеççĕ. Ку ахальтен мар. Патшалăх çакнашкал тĕслĕхсен сиенĕ-хăрушлăхĕ пысăккине ăнланать, çавăнпа асăннă йышши преступленисене тĕпчессине, çул çитменнисене хӳтĕлессине, айăплисене явап тыттарассине тĕпе хурать.***



– Çавăнпах тĕпчев ĕçне те чи ăста следовательсене шанма тăрăшатпăр, – тет РФ Следстви комитечĕн Шупашкарти следстви пайĕн ертӳçи Константин Кандасов. – Шел те, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе /53 преступление шута илнĕ/ танлаштарсан кăçал çул çитменнисем саккуна пăснипе çыхăннă кăтарту пысăкланни палăрать – 66 преступлени. ачасемпе çамрăксем хăйсем шар курнă тĕслĕхсем çав шайрах юлнă – 49.

Ачасемпе çыхăннă йывăр преступленисем кашнинче тенĕ пекех чуна çӳçентереççĕ. Унашкаллисем юлашки вăхăтра та пулчĕç. Акă тĕп хулари Мускав районĕн сучĕ 37 çулти хĕрарăма ачана саккуна пăсса ирĕклĕхсĕр хăварнăшăн тата вĕлернĕшĕн айăпласа приговор палăртни. Ăна 12 çул çурăлăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă.

Ашшĕ-амăшĕ ыйтнипе 2 çулти хĕр ачана хреснамăшĕ йышăнса юлнă. Килте пĕччен хăварсан пĕчĕкскер хваттере тустарнипе кăмăлсăрланнă хĕрарăм ачана картон курупкана хурса скотчпа йăваланă. Хăй, маникюрпа çыхăннă пулăшу ĕçĕсем кӳрекенскер, клиентсем патне тухса кайнă. Каялла 3 сехетрен тин таврăннă. Хĕр ача вара курупкаран тухма пултарнă иккен. Тепĕр кунне хĕрарăм хăйĕн ывăлне илме садике кайнă. Пĕчĕк хĕнан аллисене колготкипе çыхнă, çăварне скотчпа çыпăçтарса каллех курупкана чикнĕ. Курупки пысăк та мар – 40х27х25 см калăпăшлă. «Ристан» ан тухайтăр тесе ăна та çиелтен скотчпа çыхнă. Сехет те 15 минут иртсен тин ывăлĕпе пĕрле килне таврăннă, хĕр ачана ирĕке кăларнă.

Виççĕмĕш кунхине хĕрарăмăн ачине садикрен илсе килмелле тата клиент патне кайса килмелле пулнă. Хĕр пĕрчи тĕлĕшпе вара каллех хăнăхнă мелпе усă курнă: аллисене колготкипе çыхса, пуçне скотчпа йăваласа курупкана «питĕрнĕ»...

Паллах, ача, хĕсĕк вырăнта эмбрион позипе хĕстерсе хунăскер, ниепле те хăтăлма пултарайман, кăшкăрса пулăшу ыйтайман. Хĕрарăм килне 22 сехет тĕлнелле кăна таврăннă – пилĕк сехет иртсен. Хĕр ача ун чухне сывламан ĕнтĕ. Экспертиза çирĕплетнĕ тăрăх – çыпăçакан хăю пĕчĕкскерĕн çăварĕпе сăмсине те хупланине кура ăна кислород çитмен, çавна май хăсăк тухнă, вăл сывлав çулĕсене лекнĕ.

Психиатри экспертизи çак вилĕмшĕн айăплă хĕрарăм психика енĕпе йĕркеллех пулнине палăртнă, урăхла каласан хăйĕн тискер хăтланăвне вăл ăнлансах тунă.

Ача вилĕмĕпе çыхăннă тепĕр тĕслĕх кăçалхи çу уйăхĕн 29-мĕшĕнче пулнăччĕ. Шупашкарти 10-мĕш шкул вĕренекенĕ никамран ирĕк илмесĕрех хăй ертсе пыракан 6-мĕш класс ачисене пляжа илсе кайнă. Тимлĕ пулман, çавна май ишме пĕлмен 12 çулти арçын ача путса вилнĕ. Унăн приговорĕ те паллă ĕнтĕ. УК 109 статйин 2 пайĕпе /хăйĕн професси тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаннине кура асăрханмасăр çынна вилĕм кӳни/ айăпланăскер тĕлĕшпе ирĕклĕхне 1,5 çуллăха виçеллĕ тумалли приговор палăртнă.

Следстви пайĕн ертӳçи ачасене мăшкăлланă, вĕсем тĕлĕшпе намăс ĕçсем тунă тĕслĕх нумаййи пирки уйрăмах пăшăрханать. Çавнашкаллисен шутĕнче шар курнă хĕр ача преступнике тытса чарма хăй пулăшнă тĕслĕх те пур. Тĕп хула урамĕнче 14 çулти хĕр ача патне пĕр арçын пынă та хăйĕн... ар хатĕрне кăтартнă. Ку иртнĕ çул вĕçĕнче пулнă. Уйăх иртсен, кăрлачра, çав путсĕр каллех çак хĕр ачана тĕл пулнă, ку хутĕнче те çаплах хăтланнă. Анчах хальхинче хĕр ача çухалса кайман: арçын хыççăн вăл асăрхамалла мар утнă, хăй полицие шăнкăравланă. Хĕр ача каласа-кăтартса пынă тăрăх пакунлисем çав намăссăра тытса чарнă.

> ПĔЧĔК ХĂНАН АЛЛИСЕНЕ КОЛГОТКИПЕ ÇЫХНĂ, ÇĂВАРНЕ СКОТЧПА ÇЫПĂÇТАРСА КАЛЛЕХ КУРУПКАНА ЧИКНĔ. КУРУПКИ ПЫСĂК ТА МАР – 40х27х25 СМ КАЛĂПĂШЛĂ. «РИСТАН» АН ТУХАЙТĂР ТЕСЕ ĂНА ТА ÇИЕЛТЕН СКОТЧПА ÇЫХНĂ

Унăн приговорĕ паллă ĕнтĕ. Чăн та, Константин Анатольевич шухăшĕпе, вăл ытла та «çемçе». Çулталăк çурăлăха ирĕклĕхне виçеллĕ тунипех çырлахнă. Мĕн тăвăн, саккун çапларах. Следстви пайĕн ертӳçин шухăшĕпе, ачасене мăшкăлланă, намăс кăтартнă йышши преступленисем тĕлĕшпе яваплăх хаяр пулмалла. Сăмах май, ачасен умĕнче хăйĕн ар хатĕрĕпе мăнаçланма кăмăлланă арçын психика тĕлĕшĕнчен чирлĕ мар-мĕн – çакна экспертиза çирĕплетнĕ.

Ачасем чӳречерен тухса ӳкнĕ тĕслĕхсем пирки те сăмах пулчĕ. Следстви пайĕн производствинче кăçал çавнашкал 3 ĕç пулнă. Кашнинпех тĕрĕслех ирттернĕ, иккĕшĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма хирĕçленĕ, тепри производствăра-ха. Кашни тĕслĕхĕ – хула çыннисене каластарнăскерсем. Çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче Шумилов урамĕнчи çуртăн 9-мĕш хутĕнчи чӳречерен 2 çулти арçын ача ӳкнĕ. Ашшĕ-амăшĕ лавккана тухнă, пĕчĕкскер асламăшĕпе юлнă. Лешĕ тепĕр пӳлĕме самантлăха кăна пăрăннă. Кăштахран таврăннă та – ача çук. Чӳречене ӳпре-шăна хваттере кĕресрен ятарлă сетка карнă. Пĕчĕкскер ун çине таяннă...

Асăннă тĕслĕхсенче виççĕшĕнче те ĕç-пуç хайхи сеткăпа çыхăннă. Пĕчĕкскерсем вăл çирĕп маррине ăнланмаççĕ ĕнтĕ, çавăнпа ун çине таяnaççĕ. Эппин, сыхлăх пушшех кирлĕ. Пӳлĕмре пĕчĕк ача пулсан усă чӳрече – пысăк хăрушлăх. Тепĕр тесен ачасем чӳречене хăйсем тĕллĕн уçни те пулать. Çавăнпа ятарлă питĕркĕчсемпе усă курни шанчăклă. Шăпăрлансем чӳрече янахĕ çине ан хăпарайччăр – юнашар сĕтел-пукан лартни вырăнсăр.

Следстви пайĕн производствинче ачасене хĕненипе, асаплантарнипе çыхăннă уголовлă ĕç те чылай. Кунашкалли ытларах чухне йĕркесĕр çемьесенче пулать. Çавнашкал çемьесенчи ачасемех хăйсем тĕрлĕ преступлени тăваççĕ. Ку енĕпе тĕп хулари вăл е ку шкул вĕренекенĕсем пайăррăн уйрăлса тăни пирки ыйтнине Константин Анатольевич татăклăн хуравламарĕ. Пĕр-пĕр шкул ачисем уйрăмах чарусăр-йĕркесĕр теме çук иккен. Криминал статистикине пуянлатаканнисем – профучилищĕсенче, техникумсемпе колледжсенче вĕренекен çамрăксем. Çавăнпах следстви пайĕн сотрудникĕсем вĕренӳ заведенийĕсенче пулассине, ачасемпе, çамрăксемпе курнăçса калаçу ирттерессине йăлана кĕртнĕ. «Çавнашкал тĕл пулусем пĕр ачана саккуна пăсасран сыхласа хăварни те усăллă», – тет Константин Кандасов.

Юлашки вăхăтра çамрăксем наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе аппаланнă тĕслĕхсем нумайланни сисĕнет. Интернет урлă «спайс» туянаççĕ. Электрон мелĕпе укçа тӳлеççĕ те – «виртуаллă тĕнчери» паллă мар сутуçăсем вĕсене хайхи хутăша ăçта пытарнине пĕлтереççĕ, клиентсем унтан кайса илеççĕ. Çавнашкал наркотиксемпе минренĕ хыççăн çамрăксем хăйсем ăçтине ăнланми пулнă, тăнне çухатнă тĕслĕхсем те пур. Тĕрĕссипе, медиксем вăхăтра пулăшу кӳнипе кăна вилĕмрен çăлса хăвараççĕ.

Çийĕнчен – яваплăх. Нумаях пулмасть Мускав районĕн сучĕ 17 çулти икĕ йĕкĕте айăпланă. Шăпах асăннă мелпе усă курса «спайс» туяннă. Вăрттăн сутуçăсем Элкер урамĕнчи пĕр çурт подъездне пытарса хăварнă наркотике илнĕ хыççăн каччăсем ăна çавăнтах туртнă. Юнашар патруль иртнĕ – вĕсене тытса чарнă. Иккĕшне те çулталăк çурăлăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Юрать-ха, условнăй майпа кăна. Урок пулĕ-ши?

Черетлĕ призыв тапхăрĕ пуçланнине кура Константин Анатольевич çар тивĕçне пурнăçласран пăрăнакансен ыйтăвне те çĕклерĕ. Çуркуннехи призыв тапхăрĕнче унашкаллисем пирки 4 уголовлă ĕç пуçарнă. Айăплисем штрафпа кăна хăтăлса юлнă-ха, анчах судпа айăпланни – хăйсен, пулас ачисен ятне ĕмĕрлĕх варалани. Вĕсем, калăпăр, патшалăх службинче ĕçлеймĕç. «Хăшĕсем çаплах калаççĕ: судпа айăпланатăп, анчах çара каймастăп! Çарта, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, паян условисем лайăх – кăнтăрлахи «шăплăх сехечĕ» те пур теççĕ. Çитереççĕ, тумлантараççĕ. Служба вăхăчĕ те – çулталăк кăна. Мĕнрен хăраççĕ – ăнланмалла мар», – тĕлĕнет пай пуçлăхĕ.

Çав хăравçăлăх тепĕр чух путишле самантсем те çуратать. Уголовлă ĕç пуçарнă тĕслĕхсенчен пĕринче, сăмахран, каччă ăсату касĕ те йĕркеленĕ. Тусĕсем, пĕлĕшĕтăванĕ пухăннă, йĕкĕте çар тивĕçне чыслăн пурнăçласа таврăнма суннă. Ирхине çар комиссариатне кайнă. Унта çитсен вара пулас салтак паспортне çĕклесе çапнă та тара панă – салтак тумне тăхăнас темен. Çар ретне тăман – суд умне тăнă.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Ыйту-хурав*

## Хваттертен кăларма пултараççĕ

**Коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлемелли парăма татманшăн хваттертен ирĕксĕрлесе кăларни саккунлă-и?**

**И.ИВАНОВА,**
Тăвай районĕ.

Ыйтăвĕ унтан та – хуравне **Тăвай районĕн прокурорĕнчен Оксана Ястребовăран** ыйтрăмăр.

– РФ Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕн 90 статйипе /хваттере е пӳлĕме тара илнĕ çынна тата унăн çемйин пĕрле пурăнакан членĕсене социаллă найм килĕшĕвĕпе пурăнмалли урăх вырăна куçарса хваттертен кăларса яни/ килĕшӳллĕн çын тата унăн çемйин пĕрле пурăнакан членĕсем шута илмелли сăлтавсăрах 6 уйăх ытла хваттершĕн тата коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлемесен вĕсене суд урлă çав хваттертен кăларса яма ирĕк пур. Паллах, социаллă найм килĕшĕвĕпе пурăнмалли урăх вырăнпа тивĕçтермелле, унăн лаптăкĕ гражданссене общежитие вырнаçтарма çирĕплетнинчен кая пулмалла мар. Урăхла каласан – çын пуçне 6 тăваткал метртан кая мар, – пĕлтерчĕ Оксана Геннадьевна.

Прокурор çак саманта та палăртрĕ: хваттер тӳлевĕпе çыхăннă парăм капланнин сăлтавĕ шута илмеллискер тĕк /сăмахран, ĕç укçине вăрах тӳлеменни/ – хваттертен ирĕксĕрлесе кăларма юрамасть.

## ШИЗО – яваплăх мелĕ

**Судпа айăпланнă çынна хăш тĕслĕхсенче ШИЗОна хупса хума пултараççĕ?**

**Н.АНДРЮШКИНА,**
Шупашкар хули.

Вулакан ыйтăвне **ЧР юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокурорĕн çумĕ Сергей Улисов** хуравлать:

– РФ УИКĕн 115-119 статйисемпе тата юсанмалли учрежденисен шалти йĕркин правилисемпе килĕшӳллĕн штраф изоляторне 15 талăк таран хупса хумалли яваплăх мерипе юсанмалли учреждени пуçлăхĕ е ун вырăнне юлнă çынсем кăна усă курма пултараççĕ.

Саккунра йĕркене пăснин хăш тĕсĕсемшĕн ШИЗОна хупмаллине пайăррăн палăртман, анчах асăннă кодексăн 117 статйинче çакна çирĕплетнĕ: судпа айăпланнă май ирĕклĕхсĕр хăварнисем тĕлĕшпе яваплăх мерисемпе вĕсем йĕркене мĕнле лару-тăрура пăснине, хăйсене халĕччен мĕнле тытнине шута илмелле. Яваплăх йĕркене пăснипе шайлашуллă пулмалла. Малтанах ристанран çыртарса ăнлантару илмелле. Вăл ăнлантарма хирĕçлесен тивĕçлĕ акт çыраççĕ.

Йĕркене пăснине тупса палăртнă хыççăн 10 талăкран кая юлмасăр явап тыттармалла. Йĕркене пăсни тĕлĕшпе тĕрĕслев ирттернĕ пулсан – вăл вĕçленнĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр, анчах кун пек чухне те явап тыттарассине 3 уйăхра пурнăçламалла. Яваплăх мерипе тӳрех усă курмалла, уйрăм тĕслĕхсенче ăна палăртнă хыççăн 30 кун иртиччен. Пĕр айăпшăн темиçе яваплăх пулма пултараймасть.

Судпа айăпланнисене ШИЗОна режима сĕмсĕррĕн пăснăшăн хупаççĕ. Çав шутра – колони администрацийĕн представителĕсене пăхăнманшăн, юраман япаласем /кĕсье телефонĕ, чикекен-касакан хатĕрсем тата ыт.те/ упранăшăн, эрех-сăра ĕçнĕшĕн.

■ **К.АНТОНОВ**
**ыйтса пĕлнĕ**

*Кĕскен*

## Полици пайĕсенче – çĕнĕ пуçлăхсем

***РФ Шалти ĕçсен министерствин Етĕрне тата Комсомольски районĕсенчи пайĕсен пуçлăхĕсем улшăннă.***

Етĕрнере йĕркелĕх хуралĕн тилхепине Станислав Андреев тытнă. Вăл шалти ĕçсен органĕсенчи службăра 1993 çултанпа, пуçлăх должноçне уйăрса лартиччен ЧР ШĔМĕн коррупци сĕмĕллĕ преступленисемпе кĕрешекен пайĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе ĕçлекен оперуполномоченнăйĕ пулнă.

Муниципалитетсен Комсомольскинчи пĕрлехи пайне Владимир Порфирьев ертсе пырĕ, вăл та маларах опер пулнă – уголовлă шырав управленийĕн районсен пĕрлехи пайĕнче ĕçленĕ. Полицире – 1999 çултанпа, кăçал РФ ШĔМĕн Управлени академине пĕтернĕ.

Çĕнĕ пуçлăхсемпе асăннă пайсен ĕçченĕсене республикăн шалти ĕçсен министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Андрей Тимофеев паллаштарнă, яваплă должноçсене килнĕскерсене ĕçре ăнăçу суннă.

■ **Н.КОНОВАЛОВ**

## Вун-вун çынна улталанă

***Вăл улталаса илнĕ укçа виçи те пысăк – вун-вун миллион тенкĕ.***

Республикăн Шалти ĕçсен министерствин Следстви управленийĕ Вăрмар районĕнче çуралнă, вырăнти темиçе предприятие ертсе пыракан 41 çулти хĕрарăм тĕлĕшпе «уйрăмах пысăк виçепе улталани» статьяпа уголовлă ĕç пуçарнă.

Хĕрарăм темиçе банкран пысăк виçепе кредитсем илнĕ. Анчах çакăнпа кăна çырлахман, мĕн пур тăванне, пĕлĕшĕсене тата хăйĕн предприятийĕсен ĕçченĕсене кредит учрежденийĕсенчен ун валли кивçен илмешкĕн ӳкĕте кĕртнĕ. Шар курнисенчен хăшĕсем /вĕсем миçен пулни те тĕп-тĕрĕс паллă мар-ха, темиçе теçетке çын – ку иккĕленӳсĕр/ распискăсăр-мĕнсĕрех ăна кашни 150 пин тенкĕ е ытларах та укçа панă.

Ултавçă çемйипе пĕрле Чăваш Енрен тухса кайма хатĕрленни пирки информаци çитсен ШĔМĕн следстви управленийĕн следстви пайĕ судран предпринимателе арестлеме ыйтнă. Çапла тунă та – маларах та судпа айăпланнăскер следстви пынă вăхăтра изоляторта пулĕ.

■ **К.НИКОДИМОВ**

## Депутата шанмаççĕ

***Следстви комитечĕн вырăнти органĕсем Канаш хулин депутатсен пухăвĕн депутачĕ, «Стройсервис» ООО учредителĕ тата директорĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Ăна ултав çулĕ çине тăнă тесе шанмаççĕ.***

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн пĕлтĕрхи утă уйăхĕнче Канаш хула администрацийĕ «Стройсервис» ОООпа Павлов урамĕнчи автоçула юсама муниципалитет контракчĕ тунă. Хакĕ – 1,3 млн ытла тенкĕлĕх. Çурла уйăхĕнче строительство фирми саккасçа контрактра пăхнă пĕтĕм ĕçе пурнăçланине ĕнентерекен суя документсем панă. Чăннипе тивĕçлĕ пахалăх пулманнине, ĕç калăпăшне чакарнине кура 700 пин ытла тенкĕлĕх çеç ĕç пурнăçланă. Суйине чăнни вырăнне хунă май муниципалитет сотрудникĕсем укçана туллин куçарнă. Çапла вара муниципалитет бюджетне 600 пин ытла тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ.

Следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ ĕç-пуçа уçăмлăх кӳме тивĕç.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

*Яваплăх*

## Хатĕрленни те – преступлени

***Шупашкар районĕн сучĕ тĕп хулара пурăнакан 26 çулти Игорь Востриков тĕлĕшпе приговор палăртрĕ. Çамрăк çын пысăк виçепе саккуна пăсса наркотик сутма тăнăшăн айăпланчĕ.***

Вăл пĕлтĕрхи çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче каçхине Мускаври тупса палăртман пĕр çынпа унран гашиш туянмашкăн телефонпа калаçса татăлнă. Лешĕ темиçе кун иртсен 55,6 грамм наркотике Шупашкар районĕнчи Ункăпуç ялне илсе килнĕ, Вострикова панă.

Игорь гашишăн пĕр пайне хăйĕн çумĕнче хăварнă, 51,8 грамне пытарса хунă – сутма хатĕрленнĕ. Чăн та, тĕллевне пурнăçлайман, икĕ эрне иртсен ăна полици сотрудникĕсем тытса чарнă, наркотике тупса туртса илнĕ.

Востриков хăйĕн айăпне йышăнман, анчах суд вăл айăплине палăртнă, пысăк виçепе наркотик сутма хатĕрленнĕшĕн ăна вунă çуллăха çирĕп режимлă колоние ăсатма йышăннă. Приговор вăя кĕмен-ха.

■ **З.КАРАМА,**
**Шупашкар районĕн прокурорĕ**

*Ултав*

## Бюджет укçине хапсăннă

***Вырăнти судăн Çĕрпӳ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ пулнă Денис Николаев тĕлĕшпе палăртнă приговорĕ вăя кĕчĕ.***

Суд Денис Николаев служба полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнă, «Все для дома» УК директорĕ Константин Семенов тата «СТМ» ООО директорĕ Иван Федоров ултав çулĕ çине тăнă пирки пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пăнчă лартрĕ. Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – 2011 çулта асăннă управляющи компани Çĕрпӳри Терешкова урамĕнчи пурăнмалли нумай хватерлĕ 16, 18, 20-мĕш çуртсене тĕпрен юсамалли усă конкурсра çĕнтернĕ тесе йышăннă. Кайран Семенов директор асăннă ĕçсене пурнăçлама Федоровпа подряд килĕшĕвĕ тунă.

Ĕçсене пурнăçланă хыççăн саккасçăпа подрядчик калаçса татăлса тивĕçлĕ актсене райадминистраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне панă. Ĕçсен калăпăшне 10,7 млн яхăн тесе палăртнă. Чăннипе çуртсене юсассине туллин пурнăçламаннине виççĕшĕ те лайăх пĕлнĕ.

Строительствăпа техника экспертизи çирĕплетнĕ тăрăх – пурнăçланă ĕçсен чăн хакĕ 8,4 млн яхăн тенкĕлĕх çеç пулнă. Ытлашши кăтартса çырни – 2,265 млн ытла тенкĕлĕх.

Николаевпа Семенов следстви вăхăтĕнче те, судра та хăйсен айăпне йышăнман. Анчах малтанхи следстви пухнă материалсем çине таянса патшалăх айăплавçи çак ушкăн патшалăх укçине вăрланине ĕнентерсе пама пултарнă.

Унсăр пуçне Николаев тĕлĕшпе тепĕр айăплав та тăратнă. Ăна республикăн çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтермелли программипе килĕшӳллĕн саккуна пăсса укçа илнĕшĕн айăпланă. Çамрăк çемьесене шута илессине, черете тытса пырассине райадминистрацин строительство, экономика тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн пайĕ пурнăçлать. Çак подразделени пуçлăхĕ вара – шăпах район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ. Николаев района бюджет укçи килсен хăйне пăхăнса тăракана ун умĕн черетре тăракан çамрăк çемьене пĕлтерме хушман. Çапла майпа служба полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курса 2010 çулта социаллă тӳлевпе усă курмалли свидетельствăна хăй черетсĕр илнĕ.

Уголовлă ĕçе тĕпе хурса район прокуратури унран социаллă тӳлевпе шайлашуллă укçа – 464 пин тенкĕ ытларах – шыраса илме тавăç тăратрĕ. Ăна тивĕçтернĕ.

Суд Николаев должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнин икĕ саманчĕшĕн тата службăри ултавшăн айăплине çирĕплетрĕ. Ăна условнăй майпа 2 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварма йышăнчĕ. Çийĕнчен – 70 пин тенкĕлĕх штраф. Çавăн пекех унăн 2 çул патшалăх службинчи тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчи должноçсенче ĕçлеме юрамасть. Семеновпа Федоров тĕлĕшпе амнисти акчĕпе усă курнă.

■ **А.ПУШКИН,**
**Çĕрпӳ районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи**

**Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ.**




# Вăрттăн вăрçă паттăрĕ

***Пурнăçра кашниех хăйĕн ĕç-хĕлĕпе çут тĕнчене илемлетет. Çав илемĕн паллисем: тӳрĕ кăмăл, пуян ăс-хакăл, хăйсен пурнăçне Тăван çĕр-шыв ырлăхĕшĕн пама пултарни… Этемĕн чун вăйĕсен илемне нумай ентеш Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче, Афганистанра çеç мар, ытти çĕрте те кăтартнă. Ăçта тата камсем вĕсем? Ăна никам та пĕлмен. Истори аталанăвĕн хумĕ вăрттăнлăха сирсен тин вĕсен ячĕ-шывĕ уçăмланчĕ. Çав çынсенчен пĕринпе паллаштарасшăн.***

Алăк урати урлă каçса пӳрте кĕрсе тăнă Михаил амăшĕпе шăллĕне питĕ тĕлĕнтернĕ. Кĕтме те пăрахнă иккен ăна вĕсем. Çапах та чун шанăçне çухатман. Самантрах пушă сĕтел ĕçме-çимепе тулнă. Телей тĕпелĕ çуталнăн туйăннă.

– Мĕнле иртрĕ çар хĕсмечĕ? – кăсăкланнă кĕрекерисем.

– Куратăр, чĕрĕ те сывă, – пулнă хурав.

Ĕнерхи салтак çывăрма выртсан ыйхă вĕçнипе нушаланнă. Ашшĕ лартнă пӳртултă çул хушшинче палăрмаллах кивелнĕ. Мачча хăмисене тĕксĕм тĕс çапнă. Пӳлĕм ăшшипе çути те сӳнме пуçланă. Кăмака хутма вутă, çăкăр пĕçерме çăнăх пĕтнĕ. Пӳртпе сарай тăррисенче те çĕрĕшнĕ улăм çеç.

Аслă пĕлӳ илме тăрăшакан шăллĕне те пулăшмалла. Вăл çара тухса кайнă чух унран киле юлнă ача каччă йышне кĕнĕ. Шăп çавăн чух амăшĕ вара куçĕ шывланнине палăртма тăрăшмасăр Михаил аллине ĕлĕкхи патша саманинче кăларнă пĕр тенкĕлĕх хут укçа тыттарса çапла каланăччĕ:

– Ывăлăм, аçу çак укçана салтакра çӳренĕ чух хăйĕн çумĕнчен уйăрман. Эсĕ те упра...

Тен, çав укçа асамлăхĕ ăна ашшĕ килне чĕрĕ çаврăнса килчĕ? Вăл амăшĕн пилне чĕрĕллĕх парса тăчĕ ахăртне. Кам пĕлет?.. Хăй те тĕлĕнет.

Çар ретне кăрлач уйăхĕнче тăнăччĕ вăл. Байкал леш енчи çар округне çитнĕ. Вĕсен чаçĕ малтанах Чита облаçĕ урлă иртекен чукун çулăн разъездĕнче тăнă. Пĕррехинче вĕсене Монголи патшалăхĕн çумĕпе тăсăлакан чикĕ хĕррипе вăрăм канав чавма янă. Михаилăн виçи: тăршшĕ – çиччĕ, урлăшĕ – тăваттă, тарăнăшĕ – икĕ метра яхăн. Хушнине вăхăтра пурнăçланă.

«Санран чăн-чăн боец пулать», – тенĕ ăна. Офицер сăмахĕсем чăнах та юмăç пăхнăн çаврăнса килнĕ.

Çулталăкран М.Агафонова сержант звани панă. Кĕçĕн командира штурмлакан авиаци гарнизонне куçараççĕ. Çав гарнизона висĕ – Урал, Байкал леш енчи, Тинĕс çумĕнчи çар округĕсенчен çӳллĕшĕпе 167 см кая мар, 171 см вăрăм мар, ялта çуралса ӳснĕ, сăнĕпе кореец евĕр, çарпа политикăн пин отличникне пухнă. Медицинăн ятарлă комиссийĕ витĕр кăларса çĕр ачана суйласа илнĕ. Шутлă списока тĕрĕслев витĕр тухса Утаркасси каччи Михаил та лекнĕ. Çĕр салтака ятарлă шкулта сакăр уйăх вĕрентнĕ. Занятисене «Вилнĕ чух та тăшмана вĕлер» ăнланупа йĕркелесе ирттернĕ. Вĕренӳ тапхăрĕ вĕçленсен курсантсене пĕр пӳлĕме пухнă. Стена çине тĕнче карти кăларса çакнă. Малашри тĕллевсене чуна витермелле ăнлантарнă:

– Акă Аньдун, – тесе Корея чиккинче вырнаçнă Китай хули çине кăтартнă. – Сирĕн кĕçĕр çĕрле пĕр сехетре çав хулана çитме тухса каймалла. Чикĕ урлă каçма пропуск хатĕр. Кашнин питĕ йывăр, çав вăхăтрах пысăк пĕлтерĕшлĕ задани пурнăçлама тивет. Е герой пулатăр, е пуç хуратăр. Тем те пулма пултарĕ. Енчен те лару-тăру питех йывăрлансан, пирĕн пĕтĕм гарнизон та сирĕн хыççăн пырĕ. Ăнăçу сунатпăр.

Çул çине сакăр талăклăх типĕ паек панă. Сыв пуллашу йӳçекĕ пыр тĕпĕнче капланнă. Маньчжурире Китай представителĕ кĕтсе илнĕ.

– Китай çарĕн формине тăхăнма хушнă. Çийĕнчех Аньдун хулине çитернĕ. Тепĕр кун, мунчаран тухсан, Корея çарĕн формине панă. Çапла хушнă: «Темле пулсан та тыткăна çакланмалла мар. Тыткăна çаклансан сутăнчăк шутланатăр».

Наркăмăшлă ампула, харпăр хăйне е вилнĕ юлташне çунтармалли шĕвек тултарнă флакон панă. Çавăн пекех бактерологи хĕç-пăшалсенчен пите, алă тунисене хӳтĕлеме ятарлă сеткăпа тивĕçтернĕ. Çара ӳт çине наркăмăшлă шăна ларсан этеме самантрах шалкăм çапнă. Корея врачĕсем пĕлтернĕ тăрăх çапла майпа аманнă çын висĕ е пилĕк кунтан вилнĕ. Е сипленĕ хыççăн та çĕр çынран виççĕшĕ е тăваттăшĕ çеç чĕрĕлнĕ. Кайран вĕсем те нумай пурăнайман.

Михаил Михайлович Агафонова Харбин хулинче çуралса ӳснĕ Ким Чунэ Дун хушаматлă çын, Корея çарĕн ретне хăйĕн ирĕкĕпе тăнă салтак пулнине ĕнентерекен удостоверени тыттарнă. Чăваш каччи çапла чăн ят-шывне çеç мар, тăван килне хут çырас ирĕклĕхне те çухатнă.

Тепĕр ир висĕ сехетре тревогăпа вăратса самолета лартнă, Çурçĕр Корейăна илсе çитернĕ, парашютпа антарнă. Висĕ халăх ачисенчен ултă çынран тăракан пĕчĕк ушкăнсем йĕркеленĕ. Кашни пĕчĕк йышран каллех тепĕр пысăк ушкăн туса хунă. Пĕчĕк йыша икшер совет, корей, китай çар çыннисем кĕнĕ. Ким Чунэ Дун пĕрремĕш йышăн командирĕ шутланнă. Унăн пулăшуçи пулма украина йĕкĕтне Гриша Рудика çирĕплетнĕ.

Америка авиацийĕ Китай, Çурçĕр Корея территорийĕсенче сывлăшра хуçаланнă. Аньдун хули çине те бомба пăрахнă.

Ким Чунэ Дун хăйĕн ушкăнĕпе Çурçĕр Корейăран фронт линийĕ урлă Кăнтăр Корейăна пĕрре çеç мар каçнă. Çар заданийĕсене пурнăçласа Америка çарĕн тылĕнче темиçе эрне те пулнă. Çурçĕр Корея çарĕн Кăнтăр Корея тĕп хулинчи Сеулра вырнаçнă агентура пĕлтерсе тăнă координатсемпе усă курса Америка çар хатĕрĕсен тата бактериологи пăшалĕсен склачĕсене сирпĕтнĕ. Çийĕнчех çапăçу вырăнне улăштарнă, вунă е вун пилĕк километр аякка тарса ӳкнĕ.

Пĕррехинче çар хатĕрĕ тиенĕ автомашинăна Америка штурмовикĕ сирпĕтет. Михаила сывлăш хумĕ 20 метра ывăтнă.



● *М.Агафонов /1949 çул, Чита облаçĕ/.*

Ун чухне çурăм шăммине амантнă. Тăватă кунран тин тăна кĕрет. Сипленсен каллех строя таврăннă. Мĕншĕн тесен вĕсене улăштаракан пулман.

М.Агафонов пурнăçланă иккĕмĕш задани те хăрушшисен йышĕнчен. Кăнтăр Корейăн тĕп хулинче Сеулта вырнаçнă Çурçĕр Корея çарĕн агентуринчен вĕсен отрядне çыхăнуçă пыма пăрахнă. Çыхăнăва йĕркелеме раци те пулăшман. Сеул хулине ултă çынлă ушкăн тухса кайнă, каялла таврăнман. Иккĕмĕш ушкăнран та хыпар пулман. Пĕр сас-хурасăр çухалнă.

«Хальхинче Ким Чунэ Дун ушкăнĕ каять», – приказ панă командир.

Тухса кайиччен пурне те çар тумне хывса вырăнти халăх çипуçне тăхăнма хушнă. Çула тухма Корея çыннин удостоверенине тата «финка» çĕçĕ çеç илме ирĕк панă. Фронт линийĕ урлă каçса тăшман тылне кĕнĕ. Китайпа Корея ачисене хулана ăсатса хăйсем ун тулашне юлаççĕ. Вăрттăн хӳтлĕх хатĕрлеççĕ. Икĕ кунтан Китайпа Корея йĕкĕчĕсем хула тулашне сывă çитеççĕ.

Михаил Агафонова задание ăнăçлă пурнăçланăшăн Çурçĕр Корейăн Ылтăн Çăлтăрне панă. Г.Рудикпа ыттисене орденпа чысланă.

Чĕрĕ юлнă паттăрсем Тăван çĕр-шыва таврăнма хатĕрленнĕ. Китай Халăх Республикин ертӳçин Мао Цзэдунăн пулăшуçи Михаил Агафоновпа Григорий Рудика йышăннă. Вăл правительство хушăвĕпе М.Агафонова хăйĕн ятне çырнă пистолет, Г.Рудика финка панă. Тата иккĕшне те костюмсем парнеленĕ. Çак наградăсене илесси вĕсем аманнă летчик, подполковник, истребительсен полк комнадирĕн, Китай правительствинчен хăйне çăлнă паттăрсене наградăлама ыйтнă хыççăн пулса иртнĕ.

Совет Союзне таврăнсан Михаил Михайловича наркăмăшлă шăнаран аманнă пĕртен пĕр салтака, çар округĕн госпитальне хураççĕ. Уйăх сипленнĕ хыççăн демобилизацилеççĕ.

■ **Лев ЛЕБЕДЕВ.**
Хĕрлĕ Чутай районĕ

# "Пукане: йăла-йĕркерен вăйă таран"

***Çакăн пек ят панă Куславккари Н.И.Лобачевский ячĕллĕ музей çуртра уçăлнă курава.***

Пукане – декораципе хушма искусство историйĕнчи асамлă тата сахал тĕпченĕ япала. Эпир ăна ачалăхри тетте тата искусствăри япала пек пĕлетпĕр. Ĕлĕк вара пуканепе тĕн, йăх йăлийĕркине тунă чухне усă курнă. Çавăнпа выставкăри экспозицире пуканен историне йăлайĕркерен пуçласа вăйă таранччене кăтартнă. Унта Пĕтĕм Раççейри "Русь мастеровая" конкурса хутшăннă алă ăстисен ĕçĕсене тăратнă.



Вĕсем хăйсем патне чĕнекен, хăйне евĕр те ырă, вашават, "чунлă" пуканесем. Пукане тĕнчи кашни çыннах тыткăна илет. Тахçан, асамлă ачалăх вăхăтĕнче вĕсем пирĕнтен кашниншĕн юлташ вырăнĕнчех пулнă. Çак туслăх нихăçан та ан пĕттĕрччĕ. Кунтах – Чăваш халăх артисткин Светлана Бубнова музее парнеленĕ итали пуканисем. Çавăн пекех Куславккари ачасен искусство шкулĕн преподавателĕн Любовь Скворцовăн тăмран ăсталанă сувенирĕсем те кăчăк туртаççĕ.

**С.ИВАНОВА.**

КИЛЕНĔÇ

# «Манăн муттик хиртех выртнă»

## Сергей Кузьмичев урхамахшăн вăхăтне те, вăй-халне те шеллемест



«Лаша – чир вăл. Юратрăн тăк ăна – ĕмĕрĕпех чун ун патнелле туртать. Çакă – киленĕç те, пурнăç та», – тет йăл кулса Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Пашьелте пурăнакан Сергей Кузьмичев. Сергей Николаевичăн килти хушма хуçалăхĕнче 4 лаша. Виççĕшĕ хуçалăхри ĕçсене тума пулăшаканĕсем. Комбинатор урхамахĕпе вара кил хуçи чупусене – ăмăртусене хутшăнать. 2400 метра чупса висĕм çул Шăмăршăра – пĕрремĕш, пĕлтĕр Чĕмпĕрте иккĕмĕш вырăн йышăннă. Çак кунсенче вара Хусантан çĕнтерӳпе таврăннă. Çил пек хăвăрт Комбинатор хăйĕнчен никама та ирттермен. Сăмах май, Комбинатора Сергей Николаевичăн ашшĕ те шутсăр кăмăллать. 75 çула хыçа хăварнăскер халĕ те лаша утланса çула тухма хатĕр. Çав вăхăтрах хăй те ватлăх çулĕсене пăхмасăрах Машук ятлă лаша усрать. «Эпĕ лашасене мĕн ачаран юрататăп. Ас тăватăп-ха: çулла, Патăрьелти хĕвеллĕ уçланкăра ярмăркка иртетчĕ. Эпĕ унччен икĕ кун маларах хире кайса кăшмана мутиклеттĕмччĕ. Хам вара мĕнле те пулин лашасем чупнине кайса курасчĕ теттĕм. 25 çухрăмра вырнаçнă Патăрьелне мĕнпе те пулин ларса тухаттăмччĕ. Уçланкăна урхамахсене курассишĕн кăна каяттăмччĕ. Вĕсем чупнине пăхаттăм та тăван яла вĕçтереттĕм. Тӳрех хире çул тытаттăм. Çитеттĕм те ĕçлеме пикенеттĕм. Эпĕ юртă /чупакан/ лашасене 3-4 çул каялла кăна усрама пуçларăм, мĕншĕн тесен вĕсемшĕн вăхăт чылай уйăрмалла. Малтанах ура çине тăрас, çурт-йĕр çавăрас тенĕ. Унтан ачасене – пирĕн висĕ хĕр – çитĕнтермелле пулнă. Халĕ вĕсем йăваран вĕçсе тухрĕç ĕнтĕ. Кăçал ав мăшăрăмпа иксĕмĕрех юлтăмăр. Çавăнпа кăшт кăна чун ыйтнă пек хамшăн пурăнасшăн. Паллах, мăшăрăм хушăран: «Эсĕ лашана манран та ытларах юрататăн», – тесе мăкăртатса илет. Маларах манăн Адмирал ятлă лаша пулнă. Комбинатора вара Патăрьелте пурăнакан Николай Пыркинран туянтăм. Ăна вăл Мускавранах илсе килнĕ. Коля – манăн вĕрентекен. Вăл мана пур ăмăртăва та чĕнет. Комбинатор – вырăс ăрачĕллĕ урхамах. Тур лаша питĕ хаклă, ут хатĕрĕсем те йӳнĕ мар. Тĕрĕссипе, арăм та пĕлмест унăн хакне. Ăна унăн умĕнче калама юрамасть», – шӳтлерĕ çемье пуçĕ мăшăрĕ Лариса çывхарнине асăрхаса. «Ут усрани пĕр енчен лайăх – вăхăтлăха арăмран тухса тарма пулать. Атту, ялан килте вăрмана каятпăр», – пĕлтерет Сергей Николаевич. «Арăмпа лаша тытаканăн канлĕх çук», – пулсан пĕр-пĕринчен ывăнатпăр та-и? Комбинаторпа эпĕ кашни кун хирте тренировка ирттеретĕп. 15 çухрăм таранччен чупатпăр. Тунти кун – уншăн кану кунĕ. Хĕлле хире кĕме çук, путать, çавăнпа тесе ахальтен каламан пулĕ. Юратнă урхамахне ачаран та лайăхрах пăхать вăл. «Ăна ирсерен 4-5 татăк сахăр, пĕр апат кашăкĕ пыл паратăп тата кашни кун – чĕрĕ 5 çăмарта /уйăхра – 155, çулталăка 1860 çăмарта кирлĕ. **Авт.**/, кăнтăрла сĕлĕ е урпа пăтти пĕçерсе çитеретĕп. Урисем çирĕп пулччăр тесе унта шурă пурă, типĕтнĕ сĕт яратăп. Кишĕрпе те сăйлатăп. Паллах, ирĕн-каçăн та типĕ сĕлĕ паратăп. Утă та умĕнчен татăлмасть», – каласа парать Сергей Николаевич. «Пĕрремĕш вырăнта – атте, иккĕмĕшĕнче – хăна, виççĕмĕшĕнче вара урхамах», – тенĕ лашана сĕре юратакан арабсем. Тутарсем те çак выльăха питĕ хисеплени паллă. Сергей Кузьмичевпа çур сехет калаçнă хыççăн акă мĕн ăнлантăм: чăваш арçынĕ те лашана шутсăр юратать, уншăн вăл вăхăтне те, вăй-халне те шеллемест.

> «ТУР ЛАША ПИТĔ ХАКЛĂ, УТ ХАТĔРĔСЕМ ТЕ ЙӲНĔ МАР. ТĔРĔССИПЕ, АРĂМ ТА ПĔЛМЕСТ УНĂН ХАКНЕ. ĂНА УНĂН УМĔНЧЕ КАЛАМА ТА ЮРАМАСТЬ»

Сергей Кузьмичев Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче пĕлӳ илнĕ. 27 çул ĕнтĕ вăрман хуçалăхĕнче вăй хурать. Маларах Киря поселокĕнче лесникре, мастерта ĕçленĕ. Халĕ – Пăлапуç Пашьел вăрман хуçалăхĕн мастерĕ. Çапла: вăрманçă та, çут çанталăк тусĕ те, спортсмен та вăл. «Çил çунатлă ут тытма кайăк чĕреллĕ çын кирлĕ», – тесе чăвашсем ахальтен каламан ĕнтĕ. Çитес вăхăтрах Комбинаторпа унăн хуçи тепĕр ăмăртăва хутшăнĕç, эпĕ вĕсене ăнăçупа телей сунатăп.

■ **Роза ВЛАСОВА.**
Андрей МИХАЙЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ

ФУТБОЛ

# Çырмапуçсем – чи вăйлисем

***Кӳкеç стадионĕнче Шупашкар районĕн футбол чемпионачĕ иртрĕ. Финалта Çырмапуç ял тăрăхĕнчи «Чикагопа» Шĕнерпуçри «Воля» командăсем ылтăн медальшĕн кĕрешрĕç.***

Пĕрремĕш таймра иккĕшĕ те самай тар юхтарчĕç. Тăрăшни ахаль пулмарĕ: кăçал çеç шкултан вĕренсе тухнă яшсем Михаил Пушков /«Воля»/ тата Никита Никифоров /«Чикаго»/ пĕрер мечĕк тапса кĕртме пултарчĕç. Иккĕмĕш тапхăрта кĕрешӳ çивĕчленчĕ, никам та парăнасшĕн пулмарĕ. Анчах хăшĕ-пĕри кăнттам выляма пуçларĕ. Вячеслав Жевалюков судья, хăй вăхăтĕнче вăл Шупашкарти «Волга» команда футболисчĕ пулнă, «айăпа» кĕнĕ яшсене асăрхаттарса сарă карточкăсем кăтартрĕ. Тĕп вăхăт вĕçленчĕ пулин те никам та çĕнтереймерĕ, çавăнпа судья кашни командăна пенальти тапма хушрĕ. Хальхинче те 3:3 шут кăна пулчĕ. Малалла – çĕнтериччен. Чăваш Республикин чемпионĕ Евгений Мамайкин лăпкăн та хуллен чупса пырса мечĕке хапха енне тапнă пек турĕ, унтан пӳскене юпан сылтăмри аялти кĕтессине вирхĕнтерчĕ. Юлашки гол «Чикаго» команда чемпион ятне çĕнсе илнине пĕлтерчĕ.

«Чи лайăх хапхаçă» ята Руслан Скворцов тивĕçрĕ. Чи нумай мечĕк тапса кĕртекенни – Валера Тунгулов. Чемпионат пĕтĕмлетĕвĕпе виççĕмĕш вырăна Апашпа Тутаркасси ял тăрăхĕсен командисем пайларĕç.

■ **Н.ПЛАТОНОВ.**
Шупашкар районĕ,
Шоркка ялĕ



# Пирĕн ентеш – компьютер ăсти

***Мускавра пенсионерсен хушшинче компьютер ăсталăхĕ енĕпе Пĕтĕм Раççейри чемпионат иртнĕ. Унта пирĕн сумлă ветерана та ăнăçнă.***

Раççей Пенсионерĕсен союзĕ пуçарнă ăмăрту Г.Плеханов ячĕллĕ Раççей экономика университетĕнче иртнĕ. 59 регион, çавăн пекех Бельги, Словаки, Беларуç, Казахстан, Узбекистан, Абхази чысне 130 ытла пенсионер хӳтĕленĕ. Икĕ кунра вĕсем слайдсем хатĕрлес, текст редакторĕпе тата шырав тытăмĕпе, патшалăх пулăшăвĕсен порталĕпе ĕçлес, харпăр хăй кабинетне йĕркелес енĕпе тата ытти вăйăпа конкурсра тупăшнă. РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – Ваттисен кунне халалласа 2011 çултанпа йĕркелекен чемпионатра пирĕн ентеш те палăрнă. Тăвай районĕнчи Тăрмăш вăтам шкулĕнче историпе обществознани вĕрентекен Вячеслав Сидоров "Патшалăх пулăшăвĕсен порталĕпе ĕçлесси" номинацире пĕрремĕш вырăн йышăннă.

**Е.АНДРЕЕВ.**



# Илемлĕ сăнсенче – пурнăç ӳкерчĕкĕсем

## Пирĕн ентешсен ĕçĕсем фотоальбомра кун çути курнă

***Аллăмра – «Призвание – фотограф» альбом. Ăна пирĕн ентеш, Канаш районĕнче çуралса ӳснĕ, хальхи вăхăтра Челябинск хулинче пурăнакан, Раççейри чи паллă фотограф Сергей Васильев пухса хатĕрленĕ.***

«Хальхи тата пурнăçран уйрăлнă маçтăрсен ĕçĕсене пĕр фотоальбома пухасси – манăн тахçанхи ĕмĕтĕм. Вĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарас, тĕнче курăмне çынсене кăтартас килчĕ. Кăçал çак ĕçе пурнăçа кĕртме май тупăнчĕ», – çырнă çĕнĕ кăларăм пуçламăшĕнче фотохудожник. Кĕнеке икĕ пайран тăрать. Пĕрремĕшĕ пĕтĕм тĕнчери паллă ăстасен ĕçĕсемпе паллаштарать, иккĕмĕшĕ «Фотографсем хăйсене сăнлаççĕ» ятлă.

Фото ӳнерĕ йĕркеленнĕренпе 175 çул çитнине халалланă альбомра 30 çĕр-шыври 140 фотографăн 500 ытла ĕçĕ вырăн тупнă. Вĕсен йышĕнче пирĕн ĕçтешĕн, «Хыпар» Издательство çуртĕн фотожурналисчĕн, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн Геннадий Верблюдовăн сăн ӳкерчĕкĕсем те пур. Вĕсенче 2013 çулта Хусанта иртнĕ Пĕтĕм тĕнче Универсиадинчи ăмăрту вăхăтĕнчи кăсăклă самантсем сăнланнă. Акă ишевçĕ финиша çитме васкать, гимнастка хăйĕн ăсталăхĕпе пурне те тĕлĕнтересшĕн. Атлета та штангăна парăнтарма çăмăл мар, хĕрсен кĕрешĕвĕ те чуна çӳçентерет, шалçапа сикекенĕн ниме пăхмасăр çӳлелле ăнтăлмалла – çапла хаклама пулать сăн ӳкерчĕксене.

Альбомра çавăн пекех Чăваш Енри паллă ытти фотографăн ĕçĕсем те пур. Вячеслав Романовăн «Тĕл пулу», «Хĕвел анăç» тата «Ман тĕнче» сăн ӳкерчĕкĕсем пире ялта иртнĕ шухă çамрăклăха илсе кĕреççĕ. Семен Игнатьевпа Борис Ивановăн ĕçĕсем те куракана пурнăçăн хăй евĕрлĕхĕпе паллаштараççĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану сулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 01.10.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7384. Заказ 3737.